Чебоксарский
Ц. Б. ... Горького
0.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ЙАНВАР. 5 ЙУНКУН
4 (4817)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

20-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтавкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Вăрлăх хатĕрлес ĕçре татăклă улшăну кирлĕ

1937 çулта социалисăмла йалхуçалăх тĕлĕнмеле пысăк çитĕнӳ турĕ. 1937 çул пире колхозсем вăйлă тырпул техникине çĕнĕ илнише кăтартса пачĕ. Йаллах, тупă çитĕнӳрен епĕр пĕр утăм та каллĕ чакма пултараймастпăр, утăм хыççăн утăм туса малала кайма çеç пултаратпăр. Çапла большевикла саккун. Çавăнпа пирĕн умра кăçал татах пысăк задачă тăрать. Пире татах вăйлă тырпул кирлĕ, çавăншăн пирĕн йалапах, çулталăк вăхăтне пăхмасăр, çулла та, кĕркунне те, хĕлле те, çуркунне те кĕрешмеле.

Вăйлă тырпул туса илесси çуракине мĕнле хатĕрленнинчен килни пуриншĕн те паллă. Çапла пулсан та, тӳрех калама, çуракине хатĕрлес тĕлĕшпе республикă кăçал пит кайа йулчĕ, ĕç начах çителĕксĕр пулса пырать. Кирлĕрен кирлĕ ĕçсенчен пĕри—вăрлăх хатĕрлесе тасатса хурас тата ахаль вăрлăха суртлă вăрлăхпа улăштарас ĕç пурнăçа кĕмесĕр йулас хăрушлăх умĕнче тăрать.

Вăрлăх хывас, ăна суртласа тасатас тата ахаль вăрлăха суртлă вăрлăхпа улăштарас ĕçсене кĕркуннех тума пулать. Ĕçе тĕрĕс организацилеме пĕлни çеç кирлĕ. Анчах, çур хĕле çитсе те çак ĕçсем пĕри те пурнăçа кĕрсе çитеймен. Декабĕрĕн 15-мĕшне, тĕштырăсем йĕнĕпе вăрлăх хывмали плана республикипе 64,4 процент тултарнă пулсан, йанварĕн 1-мĕшне çитичченн 29,4 процент çеç ӳснĕ. Вăрлăх суртлас ĕç начах начар вара. Йанварĕн 1-мĕшне 14,1 процент çеç суртласа тасатнă. Суртсăр вăрлăха суртлă вăрлăхпа улăштарас ĕç те çавах, йанварĕн 1-мĕшне плана мĕн пурĕ те 23,6 процент кăна тултарнă.

Уйрăм районсем тăрăх илсен, çак ĕçсем татах та йалăх пыни курăнать. Йĕпреç районĕнче ку тарана çитсе те вăрлăхсене 29 колхозра çеç уйăрса хунă, ахаль вăрлăха суртлă вăрлăхпа улăштармали плана районĕпе мĕн пурĕ те 2,6 процент çеç пурнăçа кĕртнĕ. Чылай районсенче ку ĕçе тытăнман та. Вăрнар районĕ суртлă вăрлăх улăштармали плана тултарнă, анчах уйăрса хунă вăрлăх акма йурăхсăр. Кунта уйăрса хунă вăрлăха тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, 63 колхозран, Кольцовкăри колхозсăр пуçне, пур колхозсенче те вăрлăх акма йурăхлă марри палăрнă. Тутаркас районĕнче районĕпе мĕн пурĕ те 4 трийер çеç ĕçлет Ишлей районĕнче çĕрĕçпай руководителĕсем районĕпе миçе трийер тата хăш выранта ĕçленине те пĕлмеççĕ. Ку районра иккĕмĕш çул ĕнтĕ Чаканар колхозĕнче пĕр трийер ним ĕççĕр ларать, ун çинчен никам та пĕлмест. Йелчĕк районĕнче те çавах, Машинă-тракторлă станци руководителĕсем те, çĕрĕç пайĕ те ку тарана çити районĕпе мĕн чухлĕ вăрлăх суртлани çинчен пĕлмеççĕ. Çакă ĕнтĕ çĕрĕç органĕсем мĕнле ĕçленине, вĕсен ĕç майĕсене уççăн кăтартса парать.

Хăшпĕр районсем районри вăтам процент хисепне çеç курса, уйрăм колхозсенче ĕç мĕнле пынине курмасăр йулаççĕ. Вăрнар районĕнчех, Кăмашри Сталин йачĕпе тăракан колхозра вăрлăх вальли уйăрса хăварнă тулă урăх тырăсемпе хутшăнса кайнă пулин те, суртлама тытăнман-ха. Шăхасан районĕнче те вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе лайăх тĕслĕх кăтартакан колхозсем хушшинче ку ĕçе пе ним тумасăр ларакансем те пур.

Имелĕевăри Доронин йачĕпе тăракан колхозăн тулă, сĕлĕ, пăрçа тата йасмăк вăрлăхĕсене пĕтĕмпе 250 центнер таран урăх колхозпа улăштармала. Вăл ĕçе халь те тытăнман. Йĕпреç районĕнчи „Çĕнĕ пурнăç" колхозра вăрлăх фончĕ уйăрмасăрах тырпулсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçме тытăннă.

Уйрăм культурăсем йĕнĕпе илсен, вăрлăх уйăрас ĕç татах та йалăх тăрать. Урпа йĕнĕпе плана 50 процента çити çеç тултарнă. Йĕтĕн вăрлăхĕ—58,7 процент, клевер—44,4 процент. Суртлă вир вăрлăхне мĕн пурĕ те 7,2 процент çеç хывнă. Пур культурăсем тăрăх та вăрлăх хывмали плана тултарса çитереймен колхозсем те сахал мар.

Мĕнле-ха вăл: тырă нумай, вăрлăх çук? Хăшпĕр районсенче вăрлăхсене уйăрса хунă пулсан та, акма йурăхлă мар. Мĕншĕн килеççĕ-ха çаксем? Çаксем пурте пĕр сăлтавран—кăçал тырă нумай пулнă тесе лăпланнипе вăрлăх ыйтăвне хакламаннинчен килеççĕ. Ку çеç те мар, çĕрĕç органĕсемпе колхозсенче сăтăрçăсемпе тата тăшманла елементсемпе кĕрешесси те тивĕçлĕ выранта тăмасть.

Вăрлăх хатĕрлес ĕç çавăн пек чăтма çук кайа йулнăшăн çĕрĕç органĕсемпе колхоз руководителĕсем айăплă. Анчах та вĕсене çеç айăплани тĕрĕс мар пулать. Ăçта йулнă пултăр выранти парти тата совет организацийĕсем?

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен пăхса тухса, çак ĕçри çитменлĕхсене палăртса, вĕсене мĕнле майсемпе пĕтермелине татăклăн кăтартса пачĕ. Çуракине хатĕрленес ĕçе, пĕтĕм парти тата совет организацийĕсен хутшăнса, çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермеле. ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ вăрлăх хатĕрлес йĕнĕпе мĕн-мĕн тумалине уйрăмăнах кăтартса пачĕ.

Кашни районă, районри кашни колхоза вăрлăх фончĕсем туса пĕтерме кĕске срuксем палăртса, вăрлăх тасатмали ĕçсене туса пĕтерес тĕлĕшпе çирĕп графиксем срuксем памала, çавăн пекех ахаль вăрлăха суртлă вăрлăхпа улăштарас тĕлĕшпе те конкретлă заданисем памала.

Йанвар уйăхĕнче пайантан пуçласа 15-мĕш числана çитиччен колхозсенче уйăрса хунă вăрлăхсене кашни колхозрах тĕрĕслесе тухмала. Вăрнар районĕнчи колхозсенче вăрлăхсем акма йурăхсăр пулни çак ĕçе уйрăмăнах тĕплĕн туса ирттерме хушать.

Çĕрĕç органĕсен оперативлă йертсе пырассине вăйлатмала. Парти организацийĕсен çак кунсенчех çĕрĕç органĕсен аппаратне çирĕплетсе çитермеле.

Кайа йулнине хăвăрт пĕтерес, çитменлĕхсене хăвăрт тӳрлетес ĕçре колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче социалисăмла ăмăртăва анлăн сарса йани шанчăклă май пулса тăрать. Çуракине хатĕрленес ĕçре колхозсенче социалисăмла ăмăртăва малти рете тăрса йертсе пырасси, коммунистсемпе колхоз активĕ тата стахановецсем хушшинчи çыхăнăва татах та çирĕплетесси—çакă пулать те ĕнтĕ вырăнсенчи парти организацийĕсем умĕнче тăракан пайанхи задачă.

Çур хĕл иртрĕ. Çураки ĕçне тухасси сывхарсах килет. Çанăсене тавăрсах ĕçлесе 1938 çулта нихăçан пулман вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешер.

ПСК(б)Парти Йарославль хула комитечĕн тĕрĕс мар постановленийĕ çинчен

ПСК(б)Партин Тĕп Комитечĕ йышăннă постановлени

ПСК(б) Партин Тĕп Комитечĕ йышăнать:

1. ПСК(б) Парти Йарославль хула комитечĕ хăйĕн 1937 çулхи нойабĕрĕн 22-мĕшĕнчи решенипе „Красный перекоп" комбинатăн тата пиравăр тĕртекен фабрикăн çĕнĕ директорĕсене тĕллесе лартса, хăйне тивĕç мар функцисене йышăннă, тесе палăртас.

2. ПСК(б) Парти Йарославль хула комитечĕн 1-мĕш пунктра кăтартнă решенине тĕрĕс мар, тесе пăрахăçа кăларас.

3. ПСК(б)Парти Йарославль хула комитетне тата унăн пĕрремĕш секретарне Зимин йулташа, ПСК(б) Парти хула комитетне сойузлă Халăх Комиссариачĕсене пăхăнса тăракан предприйатисен директорĕсене тĕллесе лартма тата хăтарма права паманни çинчен ăнлантарас.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ.

1938 çулхи йанварĕн 3 мĕш.

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри (Арагонири) фронтăн Теруел участкинче йулашки иртнĕ кунсем хушшинче пăлхавçăсем темиçе хутах хайар контратакăсем тунă. Республиканецсем ирĕксĕрех висĕ йала хăварнă. Анчах та республикă çарĕсене тепĕр хут йĕркелесе тухсан, вĕсем пăлхавçăсене хăйсен вăйхăватне кăтартса, татăклă отпор панă.

Республикă командованийĕн кругĕсенче çапăçусем малтан шухăшласа пынă пекех сарăлса пыраççĕ, тесе шутлаççĕ. Республикă çарĕсен çитĕнӳвĕ питĕ пысăк выран йышăнса тăрать. Вăл çитĕнӳ пăлхавçăсем йулашки вăхăтра сехетрен сехетех тапăнма хатĕрленнине чăрмантарнă. Республикă çарĕсем çар хатĕрĕн пысăк запасĕсене алла çавăрса илнĕ, нумай пăлхавçăсене тыткăна илнĕ çеç мар, çавнашкалах тата вĕсем пăлхавçăсен çарĕсемпе пăлхавçăсен тылĕнчи халăха республикă çарĕн хăватне тата çапăçма пултарнине те кăтартнă.

Франци личечĕ пĕлтернĕ тăрăх, пăлхавçăсен радиостанцийĕсем фашисла çарсем Теруеле тытса илнĕ, тесе хыпарсем сараççĕ. Вăл хыпарсем пĕтĕмпех суйа, тесе кăтартать пичет. Теруел республиканецсен аллинчех.

(ТАСС).

Совет Союзĕн Маршалĕ Александр Илйич ЙЕГОРОВ — ССР Союзĕн Союз Советне депутата Смоленск облаçĕнчи Вйаземски суйлав округĕ тăрăх суйланнă.

(Союзфото).

Царицына шургварди бандисенчен хăтарни 18 çул тултарни

СТАЛИНГРАД, йанварĕн 3 мĕш. (ТАСС). Йанварĕн 3-мĕшĕнче Сталинград ĕççыннисем Царицына шургварди бандисенчен хăтарни 18 çул тултарнине чаплăн паллă тунă. Чаплă кун йачĕпе пур çĕрте те массăлă пухусемпе калаçусем пулса иртнĕ.

„Красный Октябрь", Сталинградри трактор заводĕнчи, „Баррикады" заводĕнчи, Куйбышев йачĕпе тăракан хăма çуракан заводри тата ытти предприйатисенчи рабочисем пухусенче сăмах тухса каласа, Царицына хӳтленин чаплă çапăçула кунĕсене аса илнĕ тата Царицына шурбандитсенчен хатарассинче Сталинпа Ворошилов йулташсем питĕ пысăк выран йышăнса тănине палăртнă. Хĕрлĕ Вердена паттăрла хӳтлекенсен ретĕнче пулнисем рабочисем тулли кăмăллă.

Китайри вăрçă

Китай хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, декабĕрĕн 31-мĕшĕнче Китай çарĕсем контр тапăну тунипе Йапони чаçĕсем Ханчжоу (Чжецзйан провинци столицийĕ) хулинчен тухса кайнă. Йапони çарĕсем халĕ хуларан хĕвелтухăçнелле вунă километрта тăраççĕ. Тухса кайас умĕн йапонецсем хулана вут тĕртсе хăварнă. Пушар тăваттăмĕш кун тăсăлать ĕнтĕ.

Нанкинран çурçĕрелех Йанцзы йуханшывĕн çурçĕр йенĕнче лăпкă.

Йанварĕн 2-мĕшĕнче Наньчан (Цзйанси провинцин столици) çинче сывлăшри çапăçу пулса иртнĕ. Йапонин 23 самолетне хирĕç Китай авиацийĕ тухнă. Хулан сахал халăх пурнакан пайĕ çине çĕр бомбă ытла пăрахнă. Çапăçу вăхăтĕнче Йапонин 2 самолетне персе ӳкернĕ. Çав кунах Китай самолечĕсен ескадрилĕ Нанкинри аеродром çине бомбăсем пăрахнă.

Йанварĕн пĕрремĕшĕнче Çурçĕр Китайра Китай çарĕсем, хăйсен командованийĕн планĕ тăрăх, Циндаоран (Шаньдун провинцин портлă хули) тухса кайнă. Тухса кайас умĕн Йапонипе Китай фабрикĕсене, склачĕсене, пристаньсене тата хулан пысăк çуртчĕсене пĕтĕмпех çĕмĕрсе салатса тăкнă.

Йулашки кунсем хушшинче йапонецсем, Гуандуна тата Кантона çĕмĕрсе кĕме хатĕрленсе пулас, кăнтăр Китайра вăйлăн çапăçма пуçланă.

Йанварен пĕрремĕшĕнче Гуандун провинцин кăнтăр хĕрринче йапонецсем десант антарма тănă. Китайăн сыхлакан çарĕсем десанта антарма паман. Нумай шлупкăсене Йапони матросĕсемпе пĕрлех путарнă.

(ТАСС)

Совет çамрăкĕсене коммунисла воспитани парасси

Совет халăхĕ хăйĕн çамрăкĕсене хĕрӳлĕ йуратать, вăл ăна общественлă пурнăçа активлăн хутшăнтарать, вăл ăна политикă тĕлĕшĕнчен хăвăрт ӳсме кирлĕ условисене пурне те туса парать, вăл ăна государствăна тытса тăрас ĕçе хутшăнтарать. ССР Союзĕн Аслă Совечĕн депутатне çĕр ытла комсомолеца суйласа халăх совет çамрăкĕсем çине питĕ пысăк шанăç хурать. Ĕççыннисен çак посланĕцĕсемпе пирĕн пĕтĕм тăван çĕршыв мухтанма тивĕçлĕ.

Комсомол пăхса çитĕнтернĕ чи лайăх ывăлсем партине кĕреççĕ, совет тата хуçалăх ĕçĕсене йертсе пырас ĕçе куçса пыраççĕ. Партин Лысков райкомĕ (Горький облаçĕ) районти çĕрĕç пайĕн пуçлăхне комсомолец Генади Кузьмин йулташа лартнă. Вăйлă, пуçарулă работник, ăна колхозник массисем йуратаççĕ. Çак облаçра Семеновска районĕнчи сутĕç пайĕн пуçлăхне комсомолец Иван Рыбин йулташа çирĕплетнĕ. Комсомолец-педагог, вăл хăйĕн хулинчи лайăх çынсен хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулнă. Халăхăн çакнашкал шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсем комсомолра çĕршер пин. Комсомол организацисен совет çамрăкĕсене тата хăйулăрах тата ытларах государствăна хуçалăхла пулăшăн ĕçсене лартмала тумала. Çак ĕçре комсомола парти тулли пулăшать!

Ĕççыннисен массин политикăла активлăхĕ ӳсни, паллах, çамрăксене коммунисла воспитани парассишĕн ПСÇЛКС ответлăхне ӳстерет, комсомол организацисен пĕтĕм идейăлă-политикăла ĕçне лайăхлатма хушать. Ленин—Сталин партийĕ, унăн Сталинла Тĕп Комитечĕ хăшпĕр çĕрте руководствăна хĕсĕнсе кĕнĕ тăшмансенчен тасалма комсомола пулăшнă, халĕ те пулăшаççĕ. Анчах та, ПСÇЛКС Тĕпкомĕ троцкисла-бухаринла бандитсем комсомолра чылай вăхăт хуçалăхлани тăшманла ĕç тунин урокĕсенчен пур выводсене те туман.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн IV-мĕш пленумĕн решенийĕ нумайĕш йĕнчен хут çинче йулать, пурнăçа кĕрсе пымасть. Çав решенисене йышăннăран вара 4 уйăх ытла иртнĕ,—ПСÇЛКС Тĕпкомне комсомол организацисен идейăлă ĕçĕпе практикла ĕçне вăйлатма срuк çителĕклĕ. Комсомол составне политикăла ӳстермели условийĕ ПСÇЛКС ĕçĕн пур ыйтусене те коллективлă сӳтсе йавса татса парасси халĕ те начар пурнăçа кĕрет. Комсомолăн чылай организацийĕсем, уйрăмах нацилĕ республиксенче, тăшманла пăсăлса кайнă етемсенчен халĕ те тасалса çитмен. Халĕ комсомолăн çакнашкал организацисем пур: вĕсенче нумай пуш сăмах çапаççĕ, нумай резолюцисем йышăнаççĕ, анчах çамрăксемпе ачасене коммунисла воспитани парас тĕп ыйтусемпе çăннипе ĕçлемеççĕ.

ССР Союзĕн Аслă Совет суйлавĕ партипĕн ĕçлекен çĕнĕ боецсене—агитаторсене тата пропагандиссене пиншер-пиншерпе активлă общественлă ĕçе хутшăнтарчĕ. Ленин—Сталин партине йуратакан, хăйĕн халăхне йуратакан, хăйĕн аслă тăван çĕршывне йуратакан çамрăксен творчествăла пултарулăхĕ, вĕсем политикăла активлăхăн екзаменĕнче пулса çав екзамена тытни хулари тата йалти пĕтĕм çамрăк ĕççыннисемшĕн характерлă. Акă ăçтан комсомолăн хăйĕн резервне илмеле, акă кама ПСÇЛКС ретне илме кирлĕ!

Комсомол начар, питĕ çителексĕр ӳссе пыни ПСÇЛКС ĕçĕнче питĕ пысăк çитменлĕхсем пуррине, суйлав кампани вăхăтĕнче тунă çитĕнӳсене çирĕплетме пĕлменнине кăтартса парать. Комсомол речĕсен ӳсĕмĕ вăраххăн пырать, уйрăмах йалта. ПСÇЛКС ретне тăшманла елементсенчен тасатассине комсомол организацийĕсен ӳсĕмĕпе йаланах сыхăнтарса пымаççĕ, бӳрократсем тата перестраховщиксем айĕпĕне хăстарлă, парти ĕçне чĕререн йуратакан çамрăксем халĕ те комсомол тулашĕнчех йулаççĕ.

Нацилĕ республикăсенчи комсомол организацийĕсем питĕ çителĕксĕр ӳсеççĕ. Чечен-Ингушетире çавăн пек райкомсем пур, калăпăр, Урус-Мартановский, вăл комсомол ретне пĕр çынна та илмен. Узбекистанра 30 райкомран ытла 1937 çулта пĕр хĕрачана та комсомол ретне илмен!..

ПСÇЛКС речĕ вăраххăн ӳснин тĕп сăлтавĕ чи пирвайах политикăла ĕç начар тăнинче, комсомолта тăман çамрăксен ӳсе пыракан активлăхне организацилеме пĕлменнинче, çамрăксене хумхантаракан чĕрĕ ыйтусене татса пама пĕлменнинче пулать. Комсомол организацисен нумайĕш руководителĕсем—кивĕ хăнăхупа, бӳрократисăмпа, çынсем çине чунсăр пулса пăхнине сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене йеринех пĕтерсе пынипе чирленĕ.

Комсомол хăй вальли иртнĕ суйлав кампанинчи опытсенчен политикăла тата практикăла пур выводсене те тумала. Çакă комсомола хăйĕн начар йĕнĕсене пыраса тума тата çамрăксен йаланах ӳссе пыракан активлăхĕпе тата унăн ыйтăвĕсемпе руководствă айалти выранта тăни хушшинчи таталăва пĕтерме пулăшать, вăл çитменлĕх чылай комсомол комитечĕсенче пур.

Парти Тĕп Комитечĕ комсомола большевикла принципăлăха, политикăла сивĕч сыхăлăха, йăнăшсене критиклессине вăйлатма тата союзăн ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме вĕрентет.

„Комсомольская правда" йулашки вăхăтра парти Тĕпкомĕ кăтартса панисем тăрăх, комсомол организацисен ĕçне урăхлатса çĕнетессишĕн вăйлă кĕрешӳ сарса пырать. „Комсомольская правда" комсомол организацисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклессине сарса пырать, комсомолри тăшманла елементсен йулашкийĕсене тăрă шыв çине кăларать. Анчах шел, хаçатăн çак питĕ те кирлĕ ĕçне ПСÇЛКС Тĕпкомĕн бӳровĕ йаланах çителĕклĕ пулăшса пыраймасть-ха.

Çамрăксене тĕрĕс йертсе пырассин тата коммунисла воспитани парассин татăклă тĕп условийĕ — актив çамрăксен массипе кунсеренех чĕррĕн çыхăнса тăнинче. Активăн çĕнĕ кадрĕсене хăйулăнрах та тимлĕнрех ӳстерсе, пысăкрах ĕçе куçарса пымала, нумайрах çамрăксен хушшинче пулмала, çамрăк рабочисене, хресченсене, интеллигентсене политикла пурнăçа активлăн хутшăнса ĕçлеме пулăшмала, пĕтĕм çамрăк ăрува большевисăмла вĕрентсе ӳстермеле, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, социалисăм ĕçĕшĕн вăйа хурса ĕçлеме вĕрентсе ӳстермеле,—çак ĕçсене тума пултармала комсомолри чăннипех те тивĕçлĕ руководителĕн.

Çамрăк ăрун мировоззренийĕ аталанасси вĕренӳве пурнăçпа тачăн сыхăнтарнипе пулса пырать. Воспитани ĕçĕ çине вăйлăраххăн та нумайраххăн çавăрăнса пăхмала тунипе комсомолри хăшпĕр çынсем производствăла пурнăçа хутшăнса ĕçлессинчен пăрăнмала, пек ăнланнă. Суйа, тĕрĕс мар ăнлану! Вăл уйрăм комсомол организацисем стахановла йухăма сарса пырассинче хăйсен творчествăлă пуçарулăхне кăтартманнин патне илсе пычĕ.

Çирĕм çул ытларах кайала „Комсомол задачисем çинчен" йатлă статйинче Сталин йулташ çапла асăрхаттарчĕ: **комсомол активĕн практикăла ĕçне унăн теорийĕ хатĕрленĕвĕпе пĕрле туса пымасăн,** комсомолра йеплĕ те пулин тĕплĕн шухăшласа йĕркеленĕ коммунисăмла ĕçе тума май çук. „Комсомол йăвăрлăхсенчен хăрать пулсан, вăл комсомол пулман, пулĕччĕ. Комсомол активĕ хăйĕн çине пысăк задачă илчĕ. Çавăнпа та унăн тĕллев патне пырас çул çинчи йеплĕ те пулин тата мĕн пур йăвăрлăхсене çĕнтерме хăйĕнче вăйсем тупмала". (Сталин).

Çак паха та аслă тĕллев, пĕтĕм Ленинла комсомола хавхалатаракансĕр, большевиксен партийĕ тата унăн Сталинла Тĕп Комитечĕ йертсе пынипе, мĕн пур тата пур тĕрлĕ йăвăрлăхсене те çĕнтерсе пырса, çамрăксен пĕтĕм массине коммунисăм татăклăнах çĕнтерессин патне илсе пырассинче пулать.

(„Правда" умстатйинчен).

ССР Союзĕ—тĕнчери ĕççыннисен шанчăкĕ

Швейцарири коммунистсен партин „Фрейхейт" йатлă хаçачĕ çĕнĕ çул йачĕпе çырнă статйинче Совет Союзĕ пĕтĕм тĕнчери рабочи класшăн тата ĕççыннисемшĕн мĕнле выран йышăнса тănине паллă тăвать. „Хальхи пĕтĕм тĕнчери йăвăр пурнăçра,—тесе çырать „Фрейхейт",—Совет Союзĕ пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисемшĕн питĕ пысăк шанчăк пулса тăрать. Социалисăм тата ирĕклĕх çĕршывĕ, чи демократиллĕ Конституцин çĕршывĕ Аслă Совета суйланă чухне совет правительствипе халăх пĕрлĕхне демонстрацилерĕ. Хăватлă Хĕрлĕ çарлăнкă саманан чи лайăх гарантийĕ пулса тăрать. Совет власçĕ—Совет Союзĕн вăйĕ çине çапăнса фашисăм саланса кайассине пĕлекен мĕн пур фашисăма хирĕçлисен шанчăкĕ". (ТАСС).

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: И. В. Сталин Тбилисире (Тифлисре) 1905 çулхи октйабĕрĕн 18-мĕшĕнче сăмах калани. П. Василйев художник ӳкерчĕкĕ (ССР Союзĕнчи Революци Музейĕ).

Союзфото репродукцийĕ.

Пурте каникулра

Шăхасан районĕнчи вĕренекенсен хĕллехи каникулне лайăх иртерес ĕçе райкомол хутшăнкалать.

Декабĕрте райкомол вожатăйсен семинарне туса иртерчĕ, уйрăм комсомолецсене шкулсем çумне çирĕплетрĕ.

Декабĕрĕн 22-мĕшĕнче йолкă мĕнле иртересси çинчен Шупашкартан радио тăрăх панине итлессине хăшпĕр шкулсенче организацилерĕç. Кун хыççăн çĕнçул йолкисем иртерчĕç те, ĕç те пĕтрĕ.

Райсуттăвĕ каникула лайăх иртерессипе нимĕн тума та шутламан, шутламасть те.

Каникул çурри иртсе карĕ ĕнтĕ, анчах вĕренекен ачасем „каникул вăхăтне йепле иртерни çинчен райçутĕç пайĕнче те, райкомолта та пĕлмеççĕ. Пĕр шкултан та вĕсем патне каникул иртермели плана йарса паман, нумай çĕрте план пурри-çукки те паллă мар.

Райкомол уйăрнă комсомолецсенчен иккĕшĕ çеç шкулсенче пулнă, вĕсем те çĕнçулччен кăна пулнă. Райкомол хăйĕн решенине пурнăçласишĕн тăрăшмасть.

Райçуттăвĕнче ĕçлекенсем ку ыйтупа пĕр шкулта та пулман.

Çапла вара шкулсем каникула хăйсен тĕллĕнех иртерессĕ.

Çапла райçуттăвĕпе райкомол нимĕн те туманнине хăшпĕр шкулсенче (Мами т. ыт. те) вĕрентекенсем те, вожатăйсем те „каникула" кайнă.

Каникулăн йулашки кунĕсенче те пулин ĕçе йусамалла. Районри мĕн пур учителсен, комсомолецсен вăйне мобилизацилесе, вĕренекен ачасен каникулри вăхăтне усăллă иртерессине организацилемеле.

С-в.

Уйрăм стахановецсен рекорчĕсене цехсемпе бригадăсене куçарар

ÇĔМĔРЛЕ, („Чăваш Коммуне" корр.). Комбинатра стахановла йухăм нуринчен ытла стоçарнăй цехра анлăн сарăлса пынине палăртмала. Цех, 1937 çулхи плана срукченех тултарса, 1938 çула çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илчĕ. Цехри стахановецсем: Вера Каçанова, Ванилов, Гуçков, Бутин т. ыт. те уйăхри нормăсене 200—300 проц. тултарса ĕçлеççĕ.

Декабĕрĕн 30-мĕшĕнче стоçарнăй цех тата тепĕр çĕнĕ рекорд турĕ. Вăл çак кун 29.254 тенкĕлĕх продукци туса кăларса, плана 154,9 проц. тултарчĕ.

Цехри рабочисен пĕрлешÿлĕ пухăвĕнче стахановецсем çак çулта татах та лайăхрах ĕçлесе, куçса çÿрекен хĕрлĕ йалава çирĕплĕнех алра тытма пулчĕç. Çавăнпа пĕрлех, вĕсем администраци умне çителĕклĕ таран материалсем, сырьо тăрăтма ыйту лартрĕç.

Комсомолăн шалти ĕçĕсене вăйлатмала

(Шăхасан районĕнчи пухуран)

Йанварĕн 1-мĕшĕнче Шăхасанта комсомол организаци районри пухăвĕ пулса иртрĕ.

1937 çулта Шăхасан районĕнчи хăшпĕр комсомолецсем вăйлă тырпул туса илес ĕçре хăйсен стахановла ĕçĕсене кăтартрĕç. Киров йачĕпе тăракан колхозра Степанова комсомолка хăйĕн бригадинче вăтамран гектар пуçне 27 центнер, уйрăм участкăра—47 центнер тĕштырă, „Çĕнĕ пурнăç" колхозра комсомолец Назаров звено участкинчен гектар пуçне 537 центнер хĕрлĕ кăшман, 28 центнер тĕштырă, „Правда" колхозра Иванова Степанов комсомолецсем уйрăм участкăсенче гектар пуçне 200 пăтран тĕштырă туса илчĕç. Комсомолец-тракторист Моисейев, Тимофейев, Матвейев йулташсем хăйсен нормисене йалан 130—150 процент тултарса пынă.

1937 çулхи опыт 1938 çулта тырпула татах та вăйлăрах туса илме май парать.

Уйрăм колхозсенчи комсомол организацисем 1938 çулта та вăйлă тырпул туса илессишĕн аван ĕçлесе пыраççĕ. Киров йачĕпе тăракан колхоз, комсомолецсем аван хутшăнса ĕçленипе, çурхи акана хатĕрленес тĕлĕшпе районра малти вырăнта пырать. Халĕ вĕсем 337 центнер фекали, 3229 лав торф, 3757 лав тислĕк уйа кăларнă. 43,75 центнер кĕл, 171 центнер кайăккĕшĕк тислĕкĕ пуçтарса хунă, 45,70 гектар çине йур тытнă.

Анчах нумай çĕрте комсомол организацисем кăçалхи вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе начар хутшăнаççĕ.

— Шăхальри „Гигант" колхозра ку тараничен те аван çапса пĕтермен,—тет Захаров йулташ.

Хăçан вĕсем çуракине хатĕрленме тытăнĕç-ши?

— „III Интернационал" колхозра та çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ, колхоз машинисем те йур айĕнчех лараççĕ. Колхоз председателĕ, комсомолец Сергейев вăхăта ĕçкĕпе иртерет,—тет Никитин йулташ.

Чул-Кăмака йалсоветне кĕрекен колхозсенче те çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçсем начар пыраççĕ. Йалсовет председателĕ, комсомолка Григорйева, пачах ĕçлеме пăрахнă. Ун пирки райĕçтăвкомĕ президиумĕ ăна ĕçрен хăтарчĕ.

Çаксене палăртса пуху çакăн пек татăклă обязательствăсем илчĕ:

1938 çулта комсомол организацисен, районĕпе гектартан вăтамăн 125 пăтран кайа мар, 67 бригадăра гектартан 150 пăтран кайа мар, 110 бригадăра—гектартан 200 пăтран кайа мар тĕштырă илессишĕн, 67 уйрăм звеносем туса вăл звеносен участкисенчен гектар пуçне 250 пăт таран тĕштырă илессишĕн кĕрешмеле.

Комсомол ретне ÿстерсе комсомол пуçламăшĕ организацисене çирĕплетни, политвĕренÿре йĕркелени, комсомол организацисен большевикла сыхăлăхне вăйлатни, комсомол ретне унта кĕçĕске кĕнĕ тăшмансенчен тасатни, районри комсомол организацисен вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре активлăн хутшăнассине татса памалла.

Ку ыйтусемпе Шăхасан районĕнчи комсомол организацисем ĕçсем начар тăраççĕ.

Комсомол организацисем начар ÿссе пыраççĕ. Сител, Кипеч, Чул Кăмака, Анат Вăрманăл, Сурăм, Шăхасан т. ыт. пуçламăш организацисем 1937 çулăн 4-мĕш кварталĕнче пачах ÿсмен. Вăл организацисенче комсомолецсем шучĕ 3—4-ран иртмест. Ватакас, Кипечре 2 комсомолец çеç тăрса йулнă, вăл унта çапса та пуçламăш организаци шутланса тăрать.

Районри 67 пуçламăш организацирен политвĕренÿ ĕçне йĕркелени 6—7 организаци çеç.

Пропагандисцем, учебниксем çитменни çинчен калаçрĕç пухура комсомолецсем.

Халăйпуçĕнче, Чулкăмакара комсомолецсем ĕçсе иртĕхни çинчен пĕр хут çеç мар илтĕнет. Аçта комсомолецсем йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлнă—унта тăшман хăйĕн ĕçне тăвать. Анчах та райкомол çак организацисене тăшмансенчен тасатса, вĕсен ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Çак фактсем организацинче самокритика çитĕлĕксĕррине, комсомолта тăман çамрăксем хушшинче ĕç начарри, йалсене культмассăлă ĕçе ăнсăртран çеç туса пыни, комсомол организацисен большевикла сыхлăх çитĕлĕксĕрри, райкомол пуçламăш организацисене начар йертсе пыни çинчен калаççĕ.

— Хурамăлти комсомол организаци йапăх ĕçлет. Политзанятисем пулмаççĕ. Райкомолра ĕçлекенсем пулăшмаççĕ. Пирĕн патра райкомолăн политвĕренÿ пайĕ пуçлăхĕ Михайлов пычĕ те, комсомолецсен пухăвне пуçтарса 2 сехетлĕ çăмăх калярĕ те, карĕ. Организаци ĕçне йусас йенĕпе нимĕн те тумарĕ,—тет Иванов йул.

Тата çакна палăртса хăвармалла. Пухува районри 667 комсомолецран 200 çеç пуçтарăннă. Пухура 14 çын çеç тухса калаçрĕç. Ку ĕнтĕ райкомол пухăва хатĕрленменнинчен килчĕ. Пуху йышăннă решенине те пур кирлĕ ыйтусем кĕрсе йулаймарĕç (культмассăлă ĕç т. ыт).

ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕ çак пухăва хатĕрленсе иртерес ĕçе пачах та хутшăнмарĕ. Ку ĕнтĕ районри организацисемпе йертсе пырас ĕç çине Обкомол сÿрĕккĕн пăхнине кăтартать.

С. Соколов.

Колхозри завод

КÿКЕÇ. Питукассинчи „Память Ленина" колхоз çак кунсенче хăма çуракан завод туса пĕтерсе ĕçлетерме пуçларĕ. Завод Атăл лешĕнче, йăлăмра ларать, кашни кун 60 кубла метр хăма çурса кăларать. „Память Ленина" колхоз заводĕ кÿршĕри колхозсене те хăма çурса парать.

Ив. Лаврентйев.

Ача çуратмали çурт

Шăмăшри (Шупашкар районĕ) Водопйанов йачĕпе хисепленсе тăракан колхоз нумайах та пулмаст ача çуратмали çурт туса пĕтерчĕ. Ача çуратмалли çуртăн пÿлĕмĕсем çута та таса, койкăсем çинче шур простăнĕсем витнĕ. Кунта акушеркă Йегорова йулташ ĕçлет.

И. Л.

Гектартан 150 пăт тырă туса илессишĕн

„Хĕрлĕ Туçа" колхоз иртнĕ çулта, вăтам шутпа, кашни гектартан 20,46 центнер тĕш тырă туса илчĕ. Ĕçкуне хакĕ те ÿсрĕ. Пĕр ĕçкунне 13 килограмран кайа мар тырă тиврĕ. Колхозра чысла ĕçлесе колхозниксенчен нумайĕшĕ нихçан курман тупăш илчĕç. Колхозри палла стахановецсем: Мулуков Данил—975 пăт, Салмин Григорий—827 пăт, Руссов Алексей—827 пăт тырă ĕçлесе илчĕç. Нумай тырпул туса илнĕ колхозниксен йышĕ пысăк.

Йалти ĕçхресченĕсем çакăн чухлĕ тырă нихçан та курман. Вĕсем революцичченхи пурнăçра хĕнхур, выçлăх тата тĕттĕмлĕх айĕнче пурăннă. Акă Руссов Алексей. Унăн ашшĕн çемйи пĕр йат çĕрпе пурăннă. Йăвăр, выçă пурнăç А. Руссов ашшĕне сывмарлантарса хăварнă, ĕçрен уйăрнă, вара 12 çулхи ачана Алексейăн суха пуçĕ хыççăн утма тивнĕ. Çамрăклах унăн кил хуçи пулма лекнĕ. Вĕсен пĕр йат çĕрне йалти пуйансем кашни çулах каса-каса илнĕ, йалтах хĕссе хăварнă.

— Çав çĕр татăкĕ çинче акса илнĕ тырпул выçăх-чĕрлĕх, чăх-чĕп усрама мар, çиме те çитмен. Çире çĕтĕк-çатăк тумтир кăна пулнă,—тет вăл.

Руссова вĕренме те çул пулман.

— Астăватăп, Захаров учител мана доска патне каларчĕ. Ĕпĕ хăраса ÿкрĕм, вăл ыйтнине, каласа параймарăм. Ăлантарса парас вырăнне, мана çăмсаран чышса кăларса йачĕ. Çавăнтанпа вĕренме пăрахма тиврĕ,—тет А. Руссов.—1930 çулта йалта колхоз организациленчĕ. Вăл асран кайми çул. Çав çултанпа ĕпĕ пуйан пурнăçпа пурăнма пуçларăм, 1018 ĕçкуне туса 800 пăт ытла тырă ĕçлесе илтĕм. Пурнăç пуйан, савăнăçлă, телейлĕ.

А. Руссов, кайа мар савăнатăх ача пурнăçра. А. Руссов пек чухăн пулнă хресченсем пурте Ленин—Сталин партийĕ, ĕçсыннисен çулпуçĕ Аслă Сталин туса панă пурнăçра савăнаççĕ. „Хĕрлĕ Туçа" колхозĕ 1938 çулта татах та вăйлă тырпул туса илесшĕн кĕрешÿве тухрĕ. Вĕсем пĕр гектартан 150 пăтран кайа мар тырпул туса илесшĕн. Вăл ĕмĕт пурнăçа кĕретĕх.

Н Квасов.

Колхоз членĕсен йышĕ ÿссех пырат

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Николайевски йалсоветне кĕрекен колхозсен йышĕ ÿссех пырат. Акă çак кунсенче Салугин йалĕнчи „Хĕрлĕ Октабĕр" колхозра 22 йедокпа 7 хуçалăх кĕчĕç, Мăн Йаваш йалĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоза 5 хуçалăх кĕчĕ; Бархоткино йалĕнчи Блÿхер йачĕпе тăракан колхоза 8 хуçалăх кĕчĕç.

Л Василйев,
ф. Добров.

Иртнĕ çулхинчен лайăх ĕçлессишĕн

Канашри Сталин йачĕпе тăракан промысла ертел иртнĕ çулта струçа завочĕ, стоçарнăй мастерской, катка-пичке, кашăк тăвакан, чăпта çапакан т. ыт. предприйатисем те уçрĕ. Çав предприйатисем çĕнĕ çула 1937 çулхи плана тултарнипе кĕтсе илчĕç. План тăрăх çулталăкра 1.329.000 тенкĕлĕх продукци кăлармалла пулсан, 1.330.000 тенкĕлĕх туса кăларнă.

Ку ÿсĕмсене социалисăмла ăмăртупа стахановла йухăма вăйлатсах пынипе тунă. Производствăра социалисăмла ăмăртса, стахановла ĕçлесе пыракан чаплă çынсем ÿçрĕç. Пайанхи куна стахановецсемпе ударниксем 53 çын шутланаççĕ. Струçкă тăвакан заводăн аслă механикĕ Александр Демйанов, вăлах рационализатор, плана 150 процента йахăн тултарса пырать. А. Панфилова, М. Варламова—станочницăсем, Артемйев, Фролов—катка-пичке тăвакансем плана 200-шер процент тултараççĕ. Çавнашкалах, вăрман хатĕрлевĕ ĕçĕнче ĕçлекен С. Петров кашни кунхи ĕç нормине 150-шер процент тултарат. Ертел правленийĕ стахановецсене пулăшсах пырать. Иртнĕ çулта 26 стахановеца канмали çуртра, 3 çынна пысăк хуласене екскурсине тата 3 çынна саваторине йачĕ.

Ертел членĕсем хушшинче культмассăлă ĕç анлăн сарăлса пырат. Ку тĕлĕшпе уйрăмах культработник пулса ĕçлекен Карзаков тăрăшнине палăртмала. Иртнĕ çулта драмкружок хастарлă ĕçлесе пычĕ. Кружокра пурĕ 27 çын. Вĕсем тăрăшнипе çулталăкра ертел членĕсем хушшинче 9 пйесă выйаса панă, 18 хутчен художествăлла вечĕрсем туса иртерчĕ. Ертел членĕсем хушшинче 386 екземпйăр хаçат-журналсем сарнă. Ертелĕн пуйан библиотекă пур. Кунта пурĕ 779 кĕнеке. Йĕркелĕ вулакансем шучĕ 187 çынна çитрĕ. Ертел çумĕнче 5 политкружок ĕçлет.

Ертел çумĕнчех Осовиахим кружокĕ ĕçлет. Çак кружок çар техникине вĕренессипе, оборона значокĕсене илессипе аван ĕçленĕ. Ертел членĕсем хушшинче „Ворошиловски стрелок" значокĕн нормине 13 çын, „ГТО" значокĕн нормине 3 çын пачĕç. Пăшалтан тĕл пеме вĕренмели кружокра 36 çын вĕренеççĕ.

Промертел 1938 çулта тата пысăк çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешет. Планпа 1938 çулта 1.581 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларма палăртнă. Çакна май сĕтел-пукан, ача-пăча теттисем тăвакан производствăсене тата аслăлатма пăхнă. Ертел членĕсем валли вулав çурчĕ, каласакан кино, çурчĕ тума палăртнă. Ертел членĕсем патне 150 точкă радио кĕртме йышăннă.

Хăлĕ аласçăсем кăçал 1937 çулхинчен те лайăхрах ĕçлессишĕн кĕрешĕве вăйлатсах пыраççĕ.

И. М.

Ӳсĕмсемпе лăпланнă

ВĂРНАР. Камаури Сталин йачĕпе тăракан колхоз 1937 çулхи I-II-III-мĕш кварталсенче вăрман хатĕрлев планне ăнăçлăх тултарса пычĕ. Вăрманта лайăх ĕçленĕшĕн колхоз председателне Семенова вăрманпромхоз 100 тенкĕ укça парса премилерĕ.

Анчах та колхоз тăваттăмĕш кварталта вăрман хатĕрлес плана 97 процент, турттарас плана пĕр процент çеç тултарчĕ. Ку ĕнтĕ иртнĕ кварталсенче туна çитĕнÿсемпе лăпланса ларнипе ÿссăнах кăтартса парать.

Вăрманта пĕрремĕшпе иккĕмĕш бригадăсем лайăх ĕçлесе пыраççĕ. Пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ П. Петров, иккĕмĕш бригадăн бригадирĕ И. Антонов йăланах колхозниксемпе пĕрле вăрмана ĕçлеме кайаççĕ. Вĕсен бригадисенче Йаковлев Кирилл, Арсентйева Матрена, Кириллов Василий колхозниксем тăрăшса ĕçлеççĕ, ытти колхозниксене пример кăтартаççĕ.

Виççĕмĕш бригадă ытти бригадăсенчен кайра пырать. Бригадир Большаков „манăн ĕçлекен çынсем çук" тенипех иртерсе йарать.

Государствă умĕнчи обязательствăсене пурнăçласси кашни колхозникăн тивĕçĕ пулса тăрать.

Н. Козлов.

Вăрнарти бÿрократсем

Вăрнар районĕнчи организацисем ĕçсыннисен жалăбисене кĕске вăхăтра татса памаççĕ. Жалăбăсене бÿрократла пăхаççĕ. Жалăбăсене вăхăтра тĕрĕслесе, татса парас ĕç уйрăмах Çĕрĕç пайĕнче, прокуратурăра та, комсомол райкомĕнче те йапăх тăрать.

Редакци Йермошкăри Калинин йачĕпе тăракан колхозра лашасене коньухсем йапăх пăхни, утă-улăма тирпейсĕр тытни тата Кудрйавцев колхозник айăпĕпе пĕр лаша, Кириллов колхозник айăпĕпе тепĕр лаша вилни, пĕтĕ кĕсресене йĕркелĕ пăхманни, йăвăр ĕçре ĕçлеттерсе асапланарни тата ыт. çинчен те сырнăччĕ. Редакци заметкăна вырăна тухса тĕрĕслесе, айăплисене ответ тытарас ĕçе пуçарма, иртнĕ çулти мартăн 20-мĕшĕнче, Çĕрĕç пайне йанă пулнă.

Çĕрĕç пайĕнчи бÿрократсем ку заметкăна пайанхи куна çитсе те тĕрĕслемен, виçĕ кун шырана хыççăн кăна папка ăшĕнчен тупрĕç. Заметкă çине „Блинову! проверить на месте, принять соответствующие меры через правление и общ. собрание. Срок исполнения не позднее 28 марта 1937 г. Зав. райзо Степанов" тесе резолюци хунă та, тĕрĕслемесĕрех ĕçе пĕтерсе лартнă. Çĕрĕç пайĕпе комсомол райкомĕ тĕрĕслеме йанă заметкăсене çухатни те пулнă. Прокуратурăра та жалăбăсемпе ĕçлесси çителĕксĕр. Заметкăсем тăрах вăхăтра ответ памаççĕ.

Мих. Йаковлев.

Христос çурални çинчен калакан халап

(Историлĕ справкă)

1. Христос çурални çинчен йевангелисем çырнă халапсем

Православи тĕнне ĕненекенсен çулталăкри вунпикĕ пысăк праçникĕсенчен пĕрийĕ „Христос çурални" пулат. Çав праçнике кивĕ стилпе декабĕрĕн 25-мĕшĕнче, çĕнĕ стилпе йанварĕн 7-мĕшĕнче уйавлаççĕ. Чиркÿ çыннисем çак праçнике тасаран христиансен праçникĕ, ăна малтанхи христиансем 1-мĕш ĕмĕртех уйавлама пуçăнă, теççĕ. Çакăн пек каласа вĕсем Матфейпа Лука çырнисене асă илтереççĕ. Анчах чиркÿ çыннисем çавăн пек ăнлантарса нама пăхнине ним чухлĕ те шанма çук.

Чи малтанах çакна каламала: наукă çирĕплетсе кăтартнă тăрăх, Иисус Христос чăннипе нихçан та пулман, çĕр çинче пурăнман, вăл сынсем шухăшласа кăларнă халапра калакан турă пулса тăрать; ăна пуççапакансем çеç етем сăпатла туса хунă. Христос пурăннă тата хăйĕн ĕçĕсене тунă вăхăт тĕлĕнче пурăннă писателсем (христиансем марриссем) пĕри те ун çинчен пĕр сăмахна та асăнман. Чиркÿ çыннисем Иисус пирки çырса хăварни çуккине такçанах тупса илнĕ, вара IV-мĕш ĕмĕрте çав писателсен çырнисенчен хăшпĕрисене урăхлатса çырнă. Иосиф Флавий тата Тацит çырса хăварнисене пăсса, вĕсем çине Христос çинчен хушса çырнă. Çав хушса çырнисене Иисус историри паллă та чаплă йĕркел пек тата йеврейсене çăлакан̆ĕ та, та тĕлĕнмелле ĕçсем тăвакан пулнă пек курăнат. Анчах çав хушса çырнисене ниçтех те тирпейсĕр тунă, çавăнпа та, вĕсене пулана чухнех суйса çырнине сисме пулат. Пирĕн вăхăтра Флавий çырнă алçырăвĕсен темиçе екземплăрĕ ситнĕ, çав алçырăвсенче христианла хушса çырнисем вуçех те çук.

Христиансен хăйсен авалхи произведенийĕсенче, сăмахран, „Ионнăн Апокалипсисĕнче" тата „Павăл йанă çырусенче", 1-мĕш ĕмĕрте çырнисенче, Иисуса етем йăхне пĕлĕт çинчен килсе „çăлакан" пек туса кăтартнă.

Пĕр йевангелире çеç Иисуса çĕр çинче пурăннă тата христиан тĕнĕпе чиркÿве организацилесе хăварнă етем-турă туса кăтартнă. Чиркÿ çыннисем: йевангелисене Иисуса сывăх тăнă; унăн вĕрентĕвĕ тăрăх пынă апостолсем—Матфей, Марк, Лука тата Иоанн çырнă тесе калаççĕ. Анчах ку тĕрĕс мар: чăннипе йевангелийĕ паллă мар авторсем, чиркÿ кăтартнинчен 100—140 çул кайарах çырнă. Йевангелисене тĕплĕн тишкересе тухсан, вĕсене ним чухлĕ те шанма çукки, унта тĕрлĕ сÿпĕлтетнисем, йанăшсем тата пĕр-пĕрне хирĕçлесе çырнисем туллийех пулни, тата вĕсем Иисус çинчен каласа панинче тĕп халапĕсем пулманнине палăртса калаймисем пулса тăни курăнат.

Матфей çапла каласа кăтартат: кăнтăр—иудейăри Вифлеем хулинче, Ирод патша пурăннă вăхăтра таса хĕр Марийăна тата унăн таса ватă упăшки Иосиф пурăннă. Пĕлинче Иосиф унăн хĕр тивĕçне сухатман арăмĕ Марийа такамран йăвăр çын пулнине пĕлсе пăшăрханнă та арăмне уйăрса хăваласа йама тăнă. Вара тĕлĕкре ун патне ангел пырат пулат те Марийа светуй сывлăшран йăвăр çын пулнă, унăн ывăлĕ Иисус йатлă пулат, вăл тĕнчене çăлма килет тесе ăнлантарса парат. Иосиф çавăн пек ырă хыпар калакана ĕненет те арăмне хăй патнех хăварнă. Марийа ăна ывăл ача çуратса панă.

Матфей мала Иисус Вифлеем хулинче ашшĕне амăшĕн киленчĕ çуралнă тесе каласа кăтартат. Пĕлĕт çинчен илемлĕ чаплă çăлтăр курăнса Иисус çуралнине пĕлтернĕ те хĕвелтухăçĕнчен волховсене (кĕтÿ пăхакансене) ăна пуççапма илсе пынă. Çав волховсенчен Ирод патшапа столицă (Иерусалим) халăхĕ тĕлĕнмеле ача çурални çинчен пĕлеççĕ те, пĕтĕмпех хăраса ÿкеççĕ. Ирод патша унăн влаçне туртса илсе унăн вырăнне ларма пултаракан ачаран хăтăласшăн, Вифлеем хулипе унăн таврашĕнчи ачасене массăлăн вĕлерсе пĕтерттерет. Çĕнĕрен çуралнă ачан—Иисусăн ашшĕне амăшне малтанах ангел пырса систернипе, ачине Йегипета илсе тараççĕ те, унта Ирод вилессине кĕтсе илеççĕ. Унтан вара вĕсем Палестинана таврăннă, анчах çĕнĕ патшаран, Архелайран, хăраса, хăйсен тăван хулине, Вифлеема, вырнаçман, çурçĕрти галилейсен хулине—Назарета вырнаçнă (I—II).

Йалтах урăхла çырат Лука.

Вăл çырнă тăрăх, Иисус ашшĕ-амăшĕсем йаланах Назаретра пурăннă. Унта таса хĕр Марийа патне пĕринче ангел пынă та, ăна вăл тĕлĕнмеле хăватран йăвăр çын пуласси çинчен, тата вăл ывăл ача çуратасси çинчен пĕлтерет. Тĕлĕнсе кайнă хĕр çавăн пек хăват пулассине малтанах ĕненмесĕр иккĕленнĕ, мĕншĕн тесен вăл „упăшкине пĕлмен", анчах кайран çавнашкал пулассине çураçнă.

Император Август пĕтĕм халăха çырса тухмалли çинчен саккун кăларнă. Палестинăра халăха çырса тухас ĕçе Рим патшин наместникĕ Квириний туса иртермелле пулнă.

Император кăларнă саккуна ĕçе кĕртме Иосифпа йăвăр çын Марийа хăйсем çинчен сведенисем пама хăйсен ĕлĕкхи аслашшĕсен хулине—Назаретран инçетри хулана, Вифлеема кайнă. Унта çиттсен вĕсем хулана пыракансем хватере кĕрекен çуртра вырнаçайман та, хула тулашĕнче выльăх витине вырнаçнă. Çавăнта Марийа светуй сывлăшран хăйĕн ывăлне—Иисуса çуратнă. Çак тĕлĕнмеле хăватлă пулăсемпе палăрнă кÿршĕре кĕтÿ пăхса çÿрекенсем патне ангелсем пынă та, тĕлĕнмеле ача çурални çинчен пĕлтернĕ, сывлăшра çÿлти турра савăнăçпа йурра йурланă, тата ыт. те. Ангелсем кăтартнă тăрăх, кĕтÿçсем ачапа унăн амăшĕпе Иосифа шыраса тупнă та, уй-хирте çак тĕлĕнмеле ĕç çинчен каласа панă, çавăнтан пурте тĕлĕннĕ. Унтан Иосифпа Марийа ачана иудейсен йĕркине кастартса чиркÿве кĕртсе йат хунă, вара канăçлăнах хăйсен тăван хулине—Назарета таврăннă, кашни çулах Иерусалима мăнкун праçникне уйавлама çÿренĕ (I, 26—38 II, 1—4).

2. Йевангелири хирĕçÿсемпе суйă çырнисем

Çавăн пек ĕнтĕ Матфейпа Лука Иисус Христос çурални çинчен çырнисем. Çавсем çырнисенчен ениĕр виçĕ тĕп хирĕçлĕхлĕхе, нимĕнпе те пĕр-пĕрине çураçман хирĕçлĕхсене куратпăр. Матфей сăмахĕсем тăрăх, Иисус „Ирод патша пурăннă кунсенче" çуралнă; Лука каланă тăрăх—Рим наместникĕ Квириний патша чухне, Август уйăхĕнче империри мĕн пур халăха шута илме çырса тухнă çулта çуралнă. Анчах тĕплĕнех пĕлсе çитнĕ тăрăх Ирод патша вилни 10 çул иртсен тин Рим наместникĕ Квириний Палестина пынă. Кама ĕненмеле ĕнтĕ? Ытах та Матфей: Ирод патша вăхăтĕнче тенине ĕненсен, Лука çырни пĕтĕмпех йурăхсăра тухат. Ытах та Лука çырнипе килĕшсен, вара Матфей çырни йурăхсăра тухат.

Çавнашкалах йевангелисенче Иисусăн тăван хули çинчен, унăн ашшĕ-амăшĕсем ăçта пурăнни çинчен каланисем те пĕр-пĕрне çураçулă мар. Ăçта пурăннă-ха, паланхи пурнăçĕсенче Иосифпа Марийа, иудейсен Вифлеемĕнче-и, йе галилейсен Назаретĕнче?

Наукă кăтартнă тăрăх, Назарет вăл вăхăтра пулман та. Вифлеем тăрса йулат, анчах ку хула та айаккала тухса ÿкет, мĕншĕн тесен Матфей хăйех Вифлеема Иисус çуралнă хула туса кăтартассине уйрăм шухăшсем пур пирки тапăл тесе çырнă.

Йевангели çыракансем Иисус çуралнине çырнă чухне те пĕр-пĕрине килĕштерсе пĕр пек çырайман. Лука çырнă тăрăх, Христос çуралнине ача чухнехи çулсене питех те пысăк телейлĕ пулнă пек, çемйере савăнăçлă телей пулнă пек, нимле уйрăм кансĕрлĕхсем те пулман пек кăтартнă. Матфей çырнинче йалтах урăхла, вăл Иисусăн çав вăхăтри пурнăçне йăвăр пурнăç туса, йун йухтарма тивнĕ пурнăç туса кăтартат. Матфей çырнинче питĕ хăйар Ирод патша Иисуса тата унăн ашшĕ-амăшĕсене кураймасăр тем те пĕр тунине, Вифлеем ачисене массăлăн пусса вĕлернине, Иосифпа Марийа инçетри йут çĕршыва тарнине, тата ыт. те куратпăр.

3. Христос çурални çинчен калакан халапсем ăçтан тухни çинчен

„Чĕлхеçсем", таврашĕнче тĕрлĕ турăсем, паттăрсем, историри паллă çынсем çинчен: вĕсем хĕр тивĕçне сухатман амăшĕсенчен пулнă, çуралнă чухне вĕсене тĕрлĕ майлă хĕсĕрленĕ те вĕсем çав хĕсĕрленисенчен хăватсем туса çăлăннă, тесе калакан халапсем питех те йышлă пулнă.

Акă, сăмахран, Йегипет çыннисен çакăн пек халап пулнă: хĕрарăм турă Изида хĕрлĕх тĕлĕнмеле майлă йăвăр çын пулнă та хăйĕн Тора йатлă ывăлне çуратнă, вара иккĕнĕ пĕрле улталаса усал ĕç тăвакан Сет турă хĕсĕрленинчен тарнипе хăтăлнă. Ассири патши Сарген пĕр çырура: ăна хăйне амăшĕ хĕр тивĕçне сухатмасăрах вăрттăн вырăнта çуратнă, амăшĕн вара ăна шыва пăрахма тивнĕ, анчах хĕрарăм турă Иштар пулăшнипе патшана ларма пултарнă, тесе çырат. Çавăн пек хăватлă майсемпех хăйсен хĕр тивĕçне сухатман амăшĕсенчен (хĕрсенчен) еллиниссен нумай туррисем—„çăлаканĕсем" те—Адонис, Аттис, Митра тата ыт. те çуралнă. Çавăн пек тĕлĕнмеле ачасем çуралнă чухне кашнинчех вĕсен ашшĕсем—турăсем пулнă пек курăнаççĕ. Рим çыннисем çавăн пек çуралнă тесе хăйсене „çăлакан" император Август çинчен калаççĕ; амăшĕ ăна Аполлон турăран çуратнă, а çĕнат çав çулта çуралнă ачасене пурне те вĕлерсе пĕтерме тăрăшнă.

Авалхи йеврейсен те çавнашкал халапĕсем нумай пулнă, вĕсенчен хăшпĕрисем авалхи заветăн библине те кĕнĕ. Çав халапсем, сăмахран, çакăн пек каласа панă: турă хăй тата ангелсем патриарх Исаак (Бытие, XVII—XVIII) тата вăйлă Самсон (книга судей, XIII) çуралассине ашшĕсемпе амăшĕсене малтанах пĕлтернĕ, тенĕ. Халапри Моисейа та ача чухне хăрушлăхра пулнă пек кăтартнă: Йегипет патши—фараон хăйне тата хăйĕн çĕршывне хăрушлăх пуласран хăраса хăйĕн çĕршывĕнчи йеврейсен ачисене пурне те вĕлерсе пĕтерме хушнă пулат, вара пĕр Моисей кăна тĕлĕнмеле хăватпа хăтăлса йулма пултарнă иккен.

Йеврейсен тепĕр халапĕ тăрăх, Нимврод патша пĕлĕт çинче пĕр тĕлĕнмеле çăлтăр курнă пулат: волховсем çав çăлтăр ача çуралассине, аслă халăхăн çулпуçĕ çуралассине, вăл çитсе вăхăтра пĕтĕм тĕнчене тытса тăраканĕ пулмала, тесе пĕлтернĕ; çакна илтсен, Нимврод хăйĕн патшалăхĕнчи пур ачасене те вĕлерсе пĕтерме хушнă, анчах тĕлĕнмеле хăватлă ача—пулас патриархăн Авраамăн—амăшне çав хăрушлăх çитесси çинчен малтанах систернĕ пулнă, вара амăшĕ тарса хăтăлнă та, Авраама çĕр шăтăкĕнче пурăнса çуратнă.

Паллах ĕнтĕ, йевангелисем Иисус çурални çинчен çырма авалхи чĕлхеçсен тата иудейсен халапĕсемпе усă курнă, вара вăл халапсене хăйсене майлă туса çырнă. Вĕсем Иисус Христоса турă ывăлĕ, турă етем пулнă туса кăтартма тăрăшнă, ун çинчен авалхи завет пророкĕсемех каласа хăварнă пек кăтартнă. Иисус пур çынсене те çăлма, „çĕр çинче пурте пĕр-пĕрне килĕшсе пурăнмала тума" урăхла каласан, експлоатаци пусмăрĕ айĕнче пурăнакан та нимсĕр тăрса йулнă чурасемпе чухăнсем тата влаçра тăракансем експлоататорсем хушшинчи клас кĕрешĕвне чарма çуралнă пулат.

Йулса пыракан цех

Çĕмĕрле комбинатĕнчи урапасем тăвакан цех 1937 çулхи промфинплана тултараймарĕ. Цех 1936 çулта начар ĕçленипе урок тумаç. Çĕнĕ çул пуçланнă малтанхи уйăхсенчех прорыва кĕрсе кайрĕ.

Цех начар ĕçленине, йертсе пыракансем пĕтĕмпех материал çукки çине йăвантараççĕ. Ку чăнах та тĕрĕс. Материалсăр нимĕн тума та çук. Анчах ыйтас килет: цех руководителĕсем çителĕклĕ таран материал тупса парассипе мĕн тăваççĕ-ши? Нимĕн те. Чылай чухне пур материалах йе типĕтме, йе тыткалама пĕлмен пирки ахалех сая йараççĕ, брак туса кăлараççĕ.

Цех начар ĕçленине материал çитменни çине кăна йăвантарма çук. Ытти çитменлĕхсенчен çакăсене палăртмала: цех начальникĕ Радайкин инженерла-техникла работниксем хушшинче ĕçлессине маннă. Вĕсемпе тачăн çыхăнса ĕçлени çук. Стахановла йухăма вăйлатса йарас ыйтупа канашлусем, калаçусем туса иртермест. Инженерла-техникла работниксем хăйсен тĕллĕн çес ĕçлеççĕ. Стахановецсемпе ударниксене, рабочисене ĕçлеме услови туса парассипе тăташах ĕçлесе пымаççĕ. Кама мĕн çитменнипе пĕлмеççĕ. Çавăнпа та лайăх ĕçлекен рабочи опычĕ тепĕр чухне масса хушшине тухаймаст. Тĕслĕхрен пĕр пример илсе кăтартсан та çитмеле. Денис Толстов 1934 çулта фабрик-завод шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Техникăна çав тери лайăххăн алла çаврăнса илнĕ май, 1935—36-мĕш çулсенче лайăх ĕçлесе пынă. Урапа шинисене лартмали „пресс" çинче ĕçлесе, кулленех нормăна 400 проц. тултарса пынă. Лайăх ĕçленĕшĕн уна чухне парнесем те илнĕ, радио та лартса панă.

1937 çулта ĕçсем пачах урăхланнă. Толстов, материалсем паман пирки, нормăна та тултарса ĕçлеймен. Тепĕр чухне тата йурăхсăр шынасем панă т. ыт. те. Кайарахпа урăх станоксем çине куçарнă. Йулашки вăхăтра тĕп ĕç вырăнĕ те çук. Пайан пĕр ĕçре, ыран тата тепĕр çĕрте ĕçлеттереççĕ. Хăшпĕр кун 3—4 çĕре куçараççĕ. Халĕ Толстов, паллах, нормăна тултарса ĕçлеймест.

Кун пек примерсем татах та пур. Çÿлте кăтартнă фактăран та цех начальникĕ Радайкин стахановецсемпе мĕнле ĕçлесе пыни паллă.

Кашни куллен цех начальникĕ патне тĕрлĕрен ыйтусемпе рабочисем пыраççĕ. Хăшне инструментсем кирлĕ, теприне мĕн те пулсан урăххи т. ыт. те. Анчах Радайкин вĕсемпе ăшшăн калаçса, ыйтăва çийĕнчех татса парас вырăнне, бюрократла мăнăçланса ларать. Час-часах унтан пĕр ответ: „кайран кил, йерçместĕп" тенине çеç илтме пулать.

—Мана 1936 çулта станок çинчен техприйомщика куçарчĕç. Малтанах ĕçленĕ чух, ĕç укçине ÿстеретпĕр, тесе куçарчĕç. Пайанхи кунчен те çаплах ыйтăва татса памаççĕ. Радайкин патĕнче 4—5 хут та пултăм, 4 хутчен зайавлени çырса патăм. Çук, вăл çаврăнса та пăхмаст, калаçмаст те мапла,—терĕ Афанасйев стахановец.

Цехра лайăх ĕçлекен стахановецсем пур. Анчах вĕсен йачĕсем никамăн та палла мар. Кăтарту хăмисем çине çырмаççĕ, стена хаçачĕ уйăхран уйăха çеç тухать. Вăл та пулин стахановецсен ыра опычĕсем çинчен çырмаст, хушаматсене асăннипех иртерсе йарат. Начальник та стахановецсемпе уйрăмăн пухса калаçмаст. Радайкин çултăлăк хушшинче те стахановецсем пурăннипе пырса курман.

Урапа цехĕнче 360 çын ытла ĕçлет. Вĕсенчен стахановецсем 30 процентран та иртмест. Социалисăмла ăмăртăва хут çинче çеç пурнăçлаççĕ, çырнă договорсене те тĕрĕслемеççĕ.

Култмассăлă ĕç çинчен те нумай каламали çук. Мĕншĕн тесен профсойуз организацийĕ нимĕн те тумаст. Хĕрлĕ кĕтес час-часах хупă, хут купăс, шашкă-шахмăт, тата ытти музык инструменчĕсем те шкафра выртаççĕ. Хаçат-журналсем те вăхăтра памаççĕ.

Цехра пуçламĕш комсомол организацийĕ пур. Комсомолецсенчен нумайăшĕ стахановецсем. Вĕсен ĕçлес хастарлăхĕсем çав тери пысăк. Ĕçре вĕсене тăташах пулăшса пыни кирлĕ. Анчах калас пулат, 3—4 уйăх хушшинче те цех начальникĕ Радайкин вĕсем патне пырса пĕр хутчен калаçман, чĕнсессĕн „вăхăт çукки" çине йарат.

Халĕ ĕнтĕ урапа цехĕ мĕншĕн начар ĕçлесе пыни паллă. Йулашкинчен çакна çеç калама пулать. Цех начальникĕ Радайкин, ку ĕçе куçиччен техпроп руководителĕнче ĕçленĕ чухне те, ĕçе йапăхтарса йанă пулнă. Халĕ те йапăх. Дирекцин çакăнтан вывод тумала.

Н. А. Некрасов

Кама лайăх пурăнма Руç çĕрĕнче

(Пуçламĕшĕ ĕнерхи номерте)

—„Çунат та кирлĕ мар пире,
Çăкăр пулсассăн тивеçлĕн—
Çуршар пăт кунсерен,—
Çапла май епĕр хамăрăн
Урасемпе Руç талккăшне
Виççе тухма пултарăпăр,"
тесе каларĕ Пров.

—„Пĕрер витре ерех пулсан",—
Хушрĕç ерехшĕн хыпăнса
Çунса таран Губинсем,
Иванпа Митродор.

—„Тата тивсенчĕ ирсерен—
Кашни çынна вуншар хăйар",—
Куласçĕ мужиксем.

—„Кăнтăрлапа пĕрер алтăр
Сăра, уçă кăвас..."

—„А каçхине пĕрер чейник
Пулсанчĕ вĕри чай".

Вĕсем çапла кула-кула
Сăмах çапларнă вăхăтра
Вĕсем тавра шав йавăннă
Чĕп амăш—шăкăлчи.
Итлерĕ вăл, тăнларĕ вăл,
Унтан пырса ларчĕ вăл
Тÿрех кăвайт патне.
Сиксе чĕвĕлтетрĕ вăл
Вара этем сассипе
Каларĕ Пахома:
—„Ман чĕппĕме пар ирĕк ес!

Хамăн пĕчĕкçĕ чĕппĕмшĕн
Еп парăп пысăк мул".

—Мĕн парăн ес?
—„Çăкăр парăп
Çуршар пăт кунсерен,
Пĕрер витре ерех парăп,
Ирттен вуншар хăйар тивĕ,
Кăнтăрлапа кăвас пулĕ,
Каçпа—хăй вĕри чей!"

—Анчах, пĕчĕкçĕ кайăкăм,
Ăçтан çиме мужик валли
Ерехпе çăкăр тупăн ес?—
Хусанлăчĕç Губинсем.

—„Тупма—тупатăр хăвăр та,
Сире, пĕчĕкçĕ кайăк, еп,
Каласа парăп тĕплĕн ак
Мĕнле тупмалине".
—Кала!

—„Çапла вăрман тăрăх
Кайсан кайсан вăтăрмĕш
Йупа тĕлне çитетĕр те
Унтан пĕр çухрăмран:
Тухатăр пĕр уçланкăна,
Çав пысăк мар уçланкăра
Ларат ик ватă хыр.
Çав авалхи хырсем айне
Пытарнă пĕр арча.
Арча вăл асамлăскер:
Ун ăшĕнче хăй тĕллĕнех
Сарăлакан-уçăлакан
Сĕтел çитти выртат.
Çире хăвар мĕн ыйтнă пек
Ĕçтерĕ, тăрантарĕ вăл,
Ун пурте хатĕрех.
—Ей, мулла, ыра пурлăхлă.
Хăв сарлакан сĕтел çитти.
Ыра ту мужиксене!—
тесе хуллен калайăр та,
Пурне те есĕр ыйтнă пек,
Пурне те епĕ хушнă пек,
Вăл парĕ çийĕнчех.
Хаљ кÿрĕр чĕппĕме ĕнтĕ!"

—Тăхта! Чухăн çынсем епĕр,
Инçе çула тапрантăмăр...
Куратăр, ăслă кайăк, ес,
Хĕрхен—йулташа пар пире
Кивелнĕ тумтирсем!—
Тесе тивлетлĕн таварчĕ
Ăна хирĕç Пахом.

—Штоб мужиксен сăмахĕсем
Нумай тÿсчĕр, ан сĕтĕлччĕр!—
Тесе ыйтрĕ Роман.
—Пиçĕ пушăт çăпатисем
Çуречĕр те ан тăпăлччăр,—
Тесĕ ыйтрĕ Демйан.

—Тăла-чăлха ан мурăхтăр...
Ыйтрĕç Губин тăванĕсем...
Кайăк итлесе илчĕ те
Ответ парчĕ çапла:
—„Пурне те туса ĕлкĕртĕ
Хăй уçăлса сарăлакан
Çав чаплă çивитти.
Вăл йусе, çăвĕ, типĕтĕ
Сире валљи... Хаљ пар!..."
Пахом ывăçне сарчĕ те,
Кайăк чĕппине çăмăллăн
Вĕçтерчĕ çÿлелле.
Пĕчĕкçĕ чĕпĕ савăнчĕ,
Хуллен-хуллен çÿр чарăшăн,
Аппăшĕ тĕпнĕ вĕçĕ-вĕçĕ
Сывлăнчĕ вăл пĕр тайăнна
Хăвăлăн йăвăç патне.

Ун хыççăн кайрĕ амăшĕ,
Вĕçе-вĕçе каларĕ вăл:
—„Чур! Ан манăр çакна!
Çимелисем—вăр хырăмăр
Тÿснĕ таран кăна ыйтăр,
Ерех тĕсен, вăл тăрĕсĕ.
Кунне пĕрер витре.
Кунтан ытла ыйтсан вара,
Есир кăмăлран ыйтнă пек,
Пĕр ик хутчен хăт пулĕ те,
Виççĕ çинче—инкек!"

Кайăк хăйĕн чĕппипеле
Вĕççе кайрĕ, çăлăнчĕ.
А мужиксем ретпе тăрса
Мăн çул йĕнне сулăнчĕç,
Леш йупана, вăтăрмĕшне
Часрах тупас тесе.

Тупрĕç!—Пыраççĕ чĕмсĕррĕн,
Тÿртĕн те питĕ тĕрĕссĕн
Хура-хура вăрман тăрăх,
Виççĕçĕ те шутлаççĕ
Кашни пĕр утăма.
Пĕр çухрăм виççе илчĕç ак,
Вĕсем уçланкă курчĕçĕ—
Çав пĕчĕкçĕ уçланкăра
Тăрат ик ватă хыр...

Хресченсем чавса пăхрĕçĕ,
Леш арчана кăларчĕçĕ,
Унта чăнах та тупрĕçĕ
Хăй уçăлса саралакан
Леш чаплă çиттине.
Тупрĕç, пĕр харăс кăшкăрчĕç:
—„Ей, мулла, ыра пурлăхлă,
Хăв сарлакан сĕтел çитти,
Ыр ту мужиксене!"

Пăх ак, çитти,—кар!—саралчĕ,
Ăçтан та ĕнтĕ тупăнчĕç
Хăватлă алăсем,
Витрепе ерех лартрĕçĕ,
Сăрт сулĕш çăкăр пачĕç те
Пытанчĕçĕ татах.

—Мĕскершĕн çук хăйар тата?
—Мĕскершĕн вĕри чей те çук?
—Мĕскершĕн çук кăвасĕ те?
Сасартăк пурте тупăнчĕ
Вĕсем ыйтнă пекех.

Ак хресченсем шалт иртĕхрĕç,
Çитти тавра вырнаçрĕç те,
Пуçларĕç ĕçкĕне.
Хăйсем йĕркесĕр савăннă
Ыталашаççĕ, пуптараççĕ,
Пĕр-пĕрине сăмах татаç,
Улем пĕре те вырăнсăр
Çапăçас мар тесе.
Хăйсен тавлашмалли çĕне
Йĕркелĕн, тÿрĕ кăмăллăн
Туса пырас тесе—
Руç çĕрĕнче кам пурнăçĕ
Хаваслă та тулли,
Çак тавлашулă ĕçхĕлĕн
Тĕпне йĕрне, пур чăнлăхне
Тупмасăр та пĕлмесĕр
Киле таврăнас мар тесе,
Арăмĕсемпе те унсăрăн,
Ачисемпе те унсăрăн,
Старниксемпе те унсăрăн
Калаç курнăçас мар тесе
Вĕсем татас сăмах.

Çапла çирĕп тупа туса,
Ир умĕн пурте вилнĕ пек,
Выртса сывăрса кайрĕçĕ
Сÿревçĕ мужиксем...

Арк. Ĕçхĕл куçарнă.

Газогенератор çитменни ĕçлеме чăрмантарат

Канашри вагонсем йусакан заводри комплекснăй вагонсене йусакан цех 1937 çулта промфинплана тултарассипе начар ĕçлесе пычĕ. Цех декабĕр уйăх планне те 30 процент çеç тултарчĕ.

Цех начар ĕçленине хăшĕ-пĕрисем ĕç вăйĕ çитменни çине йăвантарма пăхаççĕ.

План тулманнине ку сăлтав çине çеç йăвантарма çук. Ку таранччен ĕç вырăнĕсене йĕркелемени, ĕç дисциплини йапăххи те цеха кайала туртнă. Социалисăмла ăмăрту саралса пыни курăнмаст. 1937 çулта çырнă договорсене те тĕрĕслемен. Рабочисем кам мĕн чухлĕ тултарса ĕçленине пĕлмеççĕ.

Цех кăçал та начар ĕçлеме пуçларĕ. Халĕ çынсем çителĕклĕ. Пысăк çитменлĕхсенчен çакна палăртмала. Товарнăй цех начальникĕ Никитин ку цеха материалсем çителĕклĕ тăратмаст. Материалсем çитменни, рабочисене ахаљ тăратат. Йанварĕн 2-мĕшĕнче кислород пулманнипе, 3-мĕшĕнче газогенератор çитменнипе цех плана тултараймарĕ. Нормă тăрăх цехăн уйăхне 25 пысăк вагон йусаса кăлармала. Çак çитменлĕхсем пулнă пирки кăтартнă план çурри те пурнăçланмаст. Ĕлĕкрех 200 процентран кайа мар нормăна тултарса ĕçлекенсем халĕ нормăна та тултараймаççĕ. Ака А. Молотков йулташ материал çителĕклĕ пулсан, нормăна 300 процент тултарса ĕçлет. Йанварĕн 2—3-мĕшĕсенче пĕрер сехет ытла ахаљ тăнă пирки нормăна çеç тултарчĕ, Йуримов ахалех тăчĕ т. ыт. те.

Декабĕрĕн 28-мĕшĕнче пулса иртнĕ производствăлă канашлура комплекснăй вагонсем йусанă çĕрте ĕçлекенсем 1938 çулта йаланах нормăна 120 проц. кайа мар тултарса ĕçлеме, браксене пĕтерме обйазателствă илсе, комсомолецсен 5-мĕш бригадине ăмăртăва чĕнчĕç.

— Епĕр хамăр çине илнĕ обйазателствăна ытлашшипех тултарса пыма пултаратпăр. Рабочисен хастарлăхĕ пысăк. Анчах цех начальникĕ газогенератор тупса памаст,—терĕ комплекснăй вагонсене йусакан отделени пуçлăхĕ А. Карпов йулташ.

Карпов йулташ чăнах та тăрăшса ĕçлет. Вăл ку ĕçе декабĕрĕн 30-мĕшĕнче çеç куçнă. Уйччен маçтăр пулса ĕçленĕ. Унăн тимлĕхĕ пур. Пулăшни, çителĕклĕ таран материалсем тăратни çеç кирлĕ.

Завод управленийĕн цехсене кирлĕ пек ĕçлеттерессишĕн тимлĕнрех ĕçлемеле.

Х. Л.

Кашни кун виççĕ нормă

Канашри вагонсем йусакан заводри товарнăй комбинатăн 27-мĕш №-лĕ çулĕ çинче ĕçлекен слесăр стахановец Федор Савинкин иртнĕ çулта нормăна 300 процент таран тултарса ĕçленĕ.

Савинкин йулташ вагонсен алăкне лартна çĕрте ĕçлет. Унăн нормă тăрăх куллен пĕр вагон алăкĕ лартмала. Йанварĕн 2-мĕшĕнче вăл икĕ вагон, 3-мĕшĕнче виççĕ вагон алăкĕ лартнă.

Савинкин 1938 çулта кашни куллен 3 вагон алăкĕнчен кайа мар лартма обйазателства илчĕ. Ăмăртăва хăйпе пĕрле ĕçлекен слесăра Николайева чĕнет.

Х. Лисин.

Татах та лайăхрах ĕçлеме пулатăп

Епĕ çамрăк, кăçал 19 çула кайрăм. Производствăра та 1937 çулăн октабĕр уйăхĕнчен вара çеç ĕçлетĕп.

Мана ĕçлеме йăвăр мар. Çак кĕске вăхăтрах ĕçĕн процесне вĕренсе çитрĕм. Кашни куллен 13 йешчĕк туса кăлармала пулсан, епĕ декабĕр уйăхĕнче 30 таран туса, нормăна 222 проц. тултарса пытăм.

Çак çулта епĕ татах та лайăхрах ĕçлеме пулатăп. Нормă тăрăх уйăхне 350 йешчĕк туса кăлармала пулсан, епĕ 1000 йешчĕк туса кăларма обйазателствă илетĕп. Çавăнпа пĕрлех çакна асăрхаттаратăп: пирĕн час-часах материалсем çитменшĕн простойсем пулаççĕ. Мĕн чухлĕ калаçнă ĕнтĕ, анчах цех начальникĕ пирĕн ыйту çине çаврăнса та пăхмаст.

Йулашки кунсенче материал пулманшăнах нормăна та тултараймастăп. Хăшпĕр кун урăх ĕçсенче ĕçлетĕп.

Лайăх ĕçлеме услови кирлĕ. Пурте çителĕклĕ пулсан, ĕçлеме нимте мар, савăнсах ĕçлес килет.

Çĕмĕрле комбинатĕнчи урапа цехĕнче ĕçлекен арматурщик

В. Мансуров.

4. Христос çуралнине уйавласси (раштав) пуçланса кайни

Çак праçнике христиансен чиркÿ календарĕнче чи малтан IV ĕмĕрĕн вăтам вăхăтĕнче асăннă. Унччен христиансен урăх праçник, виççĕлĕ праçник пулнă: Иисус „турă курăнни—тĕне кĕни—çурални" пĕр праçник пулнă. Çав праçнике вĕсем йанварĕн 6-мĕшĕнче уйавланă, ăна Иегипет çыннисен тĕнĕнчен илнĕ пулнă. Ĕç кунта çапла тăрат: Иегипет çыннисем кашни çултах йанвар уйăхĕнче Озирис турă, ÿсен-тăрансен турри „курăннине"—„çуралнине" уйавлама пысăк праçник туса иртернĕ. Çак праçник Нил шывĕ хухни хыççăн уй-хирте чи малтан симĕс курăксем шăтса тухнине палăртнă; çак уйавра „шыв çинĕ" кайнă, тепĕр майлă каласан, шыв тырпулсене лайăх ÿстертĕр тесе шыва пиçеленĕ пулнă.

Иегипетра пурăннă христиансем праçнике II ĕмĕрте Иегипет çыннисене курă, Христос çуралсан тĕнчене турă йанă çалакан пек „курăнсан" уйавлама пуçланă. Çав праçнике Иисус тĕне кĕни çинчен йевангели калакан халапла çыхăнтарнă. Иегипетри христиансем, хыççăн ытти çĕрти христиансем те çав йанварти праçнике уйавлама пуçланă. Çавăн пек IV-мĕш ĕмĕрĕн вăтам вăхăтне çитиччен пынă. Ку вăхăта Рим христианĕсем, уйрăмах Рим империйĕн хĕвеланăçĕнчи пайĕнче пурăнакансем, тата тепĕр праçнике, „йазычниксен" праçникне, Персире (Иранра), пуçланса кайнă праçникне, декабĕрĕн 25-че хĕвел турри Митра „çуралнине" асăнса иртерекен праçнике хăйсен праçникĕ туса йанă. Çак праçник хĕллерен çуркуннене йенелле кайнине, çуркуннехи ĕçсене тума хатĕрленме кирлине пĕлтерекен уйав пулнă. Митра çуралнине уйавлани унчухне Рим империнче государствăлă праçникĕ пулнă, вăл праçнике уйавласшăн императорсем пит хытă тăрăшнă.

Христиан чиркÿвĕ IV-мĕш ĕмĕрте император влаçĕпе тачă çыхăнса тăма пуçланă, пур майсемпе те çав влаçа пулăшса пынă. „Йазычниксен" тĕнĕсене пĕтерсе пыма тăрăшнă, çав вăхăтрах вĕсенчен тĕрлĕ йăласене тата ытти елементсене хăйне илсе тăнă, вара çавсене хăйне майлă туса, хăйĕн интересĕсемпĕн усă курма пăхнă. Çапла вара вăл, ытти йăласемпе пĕрле, Митра „çуралнине" декабĕрте уйавлас йăлана та йышăннă. 354 çула ăна саккунласах хăйĕн календарне кĕртнĕ, унсăрăн христиансем чылайăшĕ çав праçнике уйавланă пулнă. Çавăнпа праçнике уйавлассине историлĕ çирĕплетсе кăтартмашкăн чиркÿ çыннисем Матфейпа, Лука çырнă халапсене никĕсе хунă. Вара йанварти праçнике турă курăннине тата тĕне кĕнине уйавламали кун тунă.

Христос „çуралнине" декабĕрте уйавлассин малашнехи историйĕ пысăк мар. Рим империн политикăлă рољĕ пысăк пулнипе Рим чиркÿвĕ те IV-мĕш ĕмĕрте христиан тĕнне тытакансем хушшинче пысăк вырăнта тăнă. Вăл йеринĕех çав çĕнĕ праçнике тата çĕнĕ вăхăтра уйавлассипе малтан хĕвеланăçĕнчи, кайарахпа хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсене сарнă. Ăна пĕр армйансен чиркÿвĕ, окраин чиркÿвĕ кăна йышăнман. Ку чиркÿ халиччеленех йанварĕн 6-че виççĕлĕ праçнике: турă курăннине—тĕне кĕнине—Иисус çуралнине пĕр кунтах уйавлат.

Çулсене „христос çуралнинчен" шутлама пуçлассине, христианства ĕмĕрне пуçлассине чи малтан IV-ĕмĕрте кăна тытăннă. Унччен христиансем тĕрлĕ облăçсемпе çĕршывсенче хăйсен вырăнти йĕркипе çулсем иртнине шутласа пынă, кашнин хăйĕн ĕмĕре пулнă. Сăмахран, Иегипет христианĕсем грек астрономĕ Птоломей тунă йĕрке тăрăх „Набонассар ĕмĕрĕпе" çул шутне тытса пынă. Нумайĕшĕсем çулсене III-ĕмĕрте пурăннă Рим императорĕ „Диоклетиан" тунă „ĕмĕрпе" шутласа тăнă. Тĕприсем йеврейсемпе пĕрле „тĕнчене тунинчен" шутласа пынă. 532 ç. Рим манахĕ Дионисий Малый çулсене шутлассине „Христос çуралнă" кунтан тытăнма сĕннĕ те, çак „çуралнă кунă" хăй пуçĕнчен шухăшласа кăларнă. Çулсене çак çĕнĕ йĕркепе шутласа пыма час тытăнман. Вăл йĕрке тăрăх шутласа пыма XV ĕмĕртен тин пуçланă. Германипе Францире вăл йĕркепе шутласа пыма XIII ĕмĕрте тытăннă, Англире XVIII ĕмĕрте, Российăра çав йĕркене 1700 çулта Петр I йатпа кĕртнĕ.

5. Раштав праçникĕ авалхи Руçре

„Христос çуралнине" уйавлани патне тепĕр хут куçса, унăн пирĕн çĕршыври историне пăхса тухар.

Христианства Руçре сарăлма пуçланах йерипен унти вырăнти тĕнсемпе пĕрлешсе кайса пынă. Вырăнти тĕнсенчен тĕрлĕ тĕслĕ елементсене темĕн чухлех хăйне илнĕ. Руçре декабĕрте „Христос çуралнине" уйавласси славйансен нумай кунлă праçникĕпе—„светкăсемпе" çыхăнса кайнă. Çавăнпа вара, „Христос çуралнине" уйавлас ĕçе светкă йалисем чылай кĕнĕ.

Славйансем хăйсен хĕллехи праçникĕн кунĕсенче хăйсене, хăйсен çурчĕсене тата пĕтĕм хуçалăхне „усалсенчен" „тасатнă", хăйсен килйышĕсенчен вилнĕ ваттисене тата ытти сывлăшсене хăналантарас йăлана тытнă, пÿрт-çурта тырпул лайăх пулас, сывлăша кĕртме кĕлтесем, тырă пучахĕсем тата утă илсе кĕнĕ, тырă лайăх пултăр тесе вăрлăхлăх тырра асăннă, усал сывлăшсене хăвалама тумтирсене улăштарса тĕм те пĕр пек пулса тăкăнна тата пуласçине пĕлме тĕрлĕ тĕшмĕнĕсем тунă.

Светкăн çакнашкал йăлисем пурте „Христос çуралнине" уйавланипе çыхăнса, пĕрлешсе кайнă. Вĕсене пĕртак христиан тĕнне майлă тирпейленĕ. Вĕсем тĕне ĕненекенсен раштаври (сурхури) йăлисем пулса йулнă: тĕне ĕненекенсем хăйсене, çуртсене, выљăхсене усал „йĕрнинчен" тасатасси, килте ĕлĕкхи тĕн йăлине тытса апатланасси, килти „хĕртсурта", „сиве асаттене" тата ыт. те апат парасси, пÿрт-çуртăн малти кĕтесне тата сĕтеле кĕлтесемпе, пучахсемпе тата утăпа илемлетесси, Христоса мухтав йурри йурласа килрен киле çÿрени, йумăç йарасси тата ыт. те. Çапла вара раштав праçникĕ—православи тĕнне тытакансен чиркÿре те, йалара та христиан йĕркине тата славйанла йазычествăлă йĕркесен тĕрлĕ йышши елеменчĕсем хутшăнса кайни пулса тăрат.

6. Раштава уйавлании социалă сийенĕ

Раштав праçникĕ ĕççыннисен массисемшĕн йаланах питех те реакцилĕ, сийенлĕ пулнă, халĕ те çавăн пекех пулса тăрат. Унăн идеологийĕнче чиркÿ Иисус Христос „сылăхла" етемлĕхе „хăватлăн çăлма" çĕр çинче „çуралнă" çинчен вĕрентнĕ тĕп вырăн йышăнса тăрат.

Çав вĕрентÿ тăрăх ĕççыннисем помещикла тата капиталисла обществăсенчи социалă пусмăрлĕхра пурăнни, вĕсен правасăрлăхĕ тата кĕлмĕçлĕхĕ турă умĕнче сылăхла пулнăран килет, тет. Çавăнпа ĕнтĕ, çав обществăсенче експлоататорсем хуçа пулса пурăннăран ĕççыннисем хĕн-хур тÿссе пурăнаççĕ.

Чиркÿ çыннисем раштав халапĕсемпе експлоататорла строя тата патша влаçне пулăшса пырас ĕçре вăйлăн курнă. Вĕсем пур майсемпе те халапри Иисус патша пек пулса çуралнине пит хытă ăнлантарнă, праçнике „çÿлти турра мухтав, çĕр çинче килĕшÿ, çынсенче ырă кăмăл" текен реакцилĕ лозунгпа иртернĕ. Чиркÿ çыннисем хăйсен раштаври реакцилĕ пĕтĕм проповечĕсене çав мухтав сăмахĕнче калана йеверлĕ шухăшсене сарнă: кĕлмĕçлĕ тата правасăр пурнăçпа суралса пурăнма, „çÿлти турă" йачĕшĕн çĕр çинче ыра пурнăçсăр пурăнма, класла тăрăхсăва манма чĕннĕ, кĕскерех каласан—суралăхра тÿссе пурăнма, патшан самодержавилă влаçне пăхăнса тăма, експлоататорла йĕркепе килĕшсе пурăнма чĕннĕ.

Раштав праçникĕ халăхри вăхăтра та хăйĕн питех те вăйлă реакцилĕ ĕçĕсене туса тăрат. Капиталисăмла çĕршывсенче капиталиссем, чиркÿ çыннисем тата сектантсем çакăн пекех раштав халапĕсемпе йăлисене тытнипе, тата лозунгсемпе—классен килĕшсе пурăнмала текен реакцилĕ шухăшпа сараççĕ. Раштав кунĕнче вĕсем тем тĕрлĕ майсемпе те ĕççыннисене хăйсен çине експлоататорсем çине тапăнмалла пăхассине пĕтерме, „çĕр çинче килĕшÿ" тума чĕнеççĕ. Ĕççыннисене çавăн пек килĕшсе пурăнма чĕнсе улталаса, капиталиссем хăйсен чиркÿри агенчĕсемпе пĕрле ĕççыннисен революцилĕ йухăмне йун тăктарса пусараççĕ тата—социалисăм çĕршывĕ пулса тăракан ССР Союзне хирĕç вăрçăпа тапăнма, çĕнĕрен пулас тĕнче вăрçине, империалисăмла вăрçăна хытă хатĕрленеççĕ. Пуçсем фашисла вăрă-хурахсен Китайри тата Испанири вăрçисене пулăшса тăраççĕ. Капиталисăмла çĕршывсенчи раштав—тĕнчери реакципе пуçла фашисăмăн орудийĕсенчен пĕри пулса тăрат.

Раштав пирĕн Совет Союзĕнче те реакцилĕ ĕçсене тăват. Вăл тĕрлĕ сăппа тата маçкăпа витĕнсе тытанна пуп тавращĕсемпе клас тăшманĕсен аллинчи реакцилĕ оруди пулса тăрат.

Раштав ытти тĕн праçникĕсем пекех, чи малтан çакăн пирки сийенлĕ: вăл ĕç халăхĕн пĕлÿ тĕлĕшпе кайа йулнă сийĕсен тĕшмĕшĕсене, дикарла тĕнсемпе йăласене тытма пулăшса пырат. Çак реакцилĕ туртăм хĕрарăмсем хушшинче уйрăмах хытă палăрат, вăл туртăма халиппĕр чухне хĕрсем те парăнаççĕ. 1937 çулхи раштав кунĕсенче, сăмахран, „Сталинская правда" хаçат (Ленинград облăçĕнчи Волховстройра тухакан хаçат, йанварĕн 9-мĕшĕнчи номерĕнче): Немйатова йалĕнчи хĕрсем сассисем уçă, анчах вĕсенчен пĕри те тĕн праçникĕ умĕнхи кафра вулав çуртĕнче йурлас ĕçе хутшăнмаст, хĕрарăмсем праçниксенче чиркÿре йурлаççĕ кăна тесе çырчĕ.

Кунсăр пуçне тата, раштав, çавнашкалах ытти праçниксем пекех, тĕне ĕненекенсене нумайĕшне производствăлă ĕçрен пăрат, татах вĕсем хушшинче кивĕлле ĕçкĕсем йăлисене вăйлатат. Праçниксем кунĕнче прогулсем, ĕçе тухманнисем, ĕçкĕсем, хулиганла ĕçсем, аманнисем тата ыт. те нумай пулаççĕ. Ака, сăмахран, Шиткин районĕнчи Калинин йачĕпе тăракан колхозăн иккĕмĕш участокĕнче колхозниксем икĕ кун хушши раштава уйавланă та ĕçе тухман (Хĕвелтухăç Çĕпĕр крайĕнчи Анатри Удинск районĕн „Путь Ильича" йатлă хаçатăн 1937 ç. йанварĕн 12-че тухнă номерĕнче çырнă. Смоленск йалсоветĕнчи „Знамя труда" колхозăн председателĕ Макарович раштава тăватă кун хушши „уйавланă" çавăн чухнех ĕçкĕсене кÿлме йураман самрăк айăрпа çÿренĕ (Мускав облăçĕнчи Верейăри „Верейский колхозник" хаçат 1937 çулхи йанварĕн 11-мĕшĕнче çырнă).

Раштавра Тутар республикĕнче пĕр тискер ĕç пулнă. Молотов йачĕпе хисепленекен колхозра хулиган Бобров йанварĕн 8-мĕшĕнче каçхине, раштав каçĕнче, шуйттан пек тумланнă, кĕрĕкне кутăн тăхăннă, питне хăрамла хуратнă, пуçне сÿспе чĕркенĕ, алла турчка тытнă та урам тăрăх ачасене хăратса çÿреме кайнă. Никам çук урамра вăл клуба кайакан Шурăпа Николай Толмачевсем çине сиксе ларнă. Вăл хĕрачана йур çине ÿкернĕ, кун хыççăн хĕрача чирлесе кайнă, вăл арçын ачине турчкапа хĕненĕ. Клубри çамрăксем çав „шуйттана" тытнă (Тутар республикĕнчи Бугульма хаçачĕ „Колхозник" 1937 çулхи йанварте тухнă номерте çырнă).

Раштав праçникĕпе совета хирĕçле елементсем хăйсен реакцилĕ агитацийе пропагандине сарма йаланах анлă уçă кураççĕ.

Тури Лопаснен районĕнче халăх тăшманĕсем пĕлÿ тĕлĕшĕпе кайа йулнă ĕççыннисене йанварĕн 6-мĕшĕнче, раштав праçникĕн каçĕнче Варфоломей çĕрĕ тăваççĕ, кам тĕне ĕненместĕп тесе çырăнат, вĕсене пурне те пуçса тухаççĕ (вĕлерсе пĕтереççĕ) тесе хăратнă („Блокнот агитатора", № 13, 1937 ç. стр. 28). Пуринчен ытларах чиркÿ çыннисемпе сектантсем раштавра „çĕр çинче килĕшÿ" тума чĕннисем çинелле: вĕсем пирĕн социалисăмла тăван çĕршыва тапăнма хатĕрленекен империалисăмла фашисăм хĕспăçаллăнна чухне рабочисемпе колхозниксене хĕспанлесăрланма чĕнеççĕ.

Вĕсем сыхăлăха йăвашлатма чĕнеççĕ те çавна туса халăх тăшманĕсене тÿрремĕнех пулăшса тăраççĕ.

Н. Румйанцев.

Социалă страховани çинчен декрет кăларнăранпа çирĕм çул çитрĕ

Çирĕм çул каярах, 1918 çулти йанварĕн 4-мĕшĕнче, Пĕтĕм Российăри Тĕпĕçтăвком чирленĕ вăхăтра валĵи страхласси çинчен декрет кăларчĕ, вăл декрет çине Йа. М. Свердлов алă пуснă. Çав декретăн вăйĕ „Российă республикин пĕтĕм территорине тата ĕçĕн пур отраçлисенче те [illegible]ра кĕрешсе ĕçлекен [illegible] пур çынсем çине, вĕсем арçын йе хĕрарăм пулнине, миçе çултине, мĕнле тĕне тытнине, мĕнле нацине тата мĕнле расă пулнине пăхмасăр", саралнă.

Ĕççыннисен социалă страхованийĕ—Октаберти Социалисăмлă Аслă революци çĕнтерсе илни. Совет правителстви çирĕм çул каярах чирленĕ вăхăта валĵи страхласси çинчен йышăннă декрет халĕ çĕршывăн ĕççыннисен пурнăçне сывăхла тăвассин тата вĕсен культурлăхне ÿстерессин рычагĕсенчен пĕри пулса тăнă социалă страховани пĕтĕм системишĕн тĕп никĕс пулса йулчĕ.

Граждан вăрçи çулĕсенче Совет-сен самрăк республикĕ хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе средствисене интервентсемпе шурă гвардейецсен бандисем тапăннине çапса сирес ĕçе кÿлнĕ вăхăтра, ун чухнех те ĕнтĕ государствă страхланнă ĕççыннисене вĕсем чирленĕ вăхăтра пулăшма мĕлйуншер тенкĕ укçа тăкакланă, вĕсене укçапа пулăшнă тата врачсем йарса вĕсен сывлăхне сыхланă. Фронтсенче тупăсем [illegible]анăрама пăрахсан вара социалă страховани бюджечĕ хăвартах çĕршер мĕлйун тенке çити ÿсрĕ. 1924—25 çулта страхланнисене пулăшас тĕлĕшпе тунă тăкаксем 461,5 мĕлйун тенке çитрĕç.

1937 çулта социалă страховани бюджечĕ питех нумай—5.292 мĕлйун тенкĕ пулнă. Вăл укçа-тенкĕрен çурри ытла 1937 çулта вăхăтлăха ĕçлеме пултарайманнисене пулăшма кайнă.

Çĕршер пин ĕççыннисем иртнĕ çулта санаторисенче, канмали çуртсенче тата курортсенче пулчĕç. Ĕççыннисене санаторире сывалма тата канма май парас ĕçе социалă страховани бюджетĕнчен 884.500 пин тенкĕ тăкакланă. 1937 çулта кăна çуралнă ачасене пăхса ÿстерес ĕçе тата вĕсене тăрантарма, çавăн пекех ача-пăчасене пăхса ÿсрама социалă страховани бюджечĕ тăрăх 531.148 пин тенкĕ тăкакланă.

Çак цыфăрсем совет государстви ĕççыннисемшĕн тата вĕсен ачисемшĕн сталинла тăрăшнине питех те ÿссăн кăтартса параççĕ. 1938 çулта ССР Союзĕнчи ĕççыннисен материалă пурнăçĕ татах та çÿле çĕкленет. Социалă страховани бюджечĕ те кăçал чылайах нумай ÿсет.

(ТАСС).

Германи фашисĕсен йутçĕршывсенчи шпионла ĕçĕсем

Швейцарири социал-демократсен партин „Вернер Тагвахт" хаçачĕ Германи фашисĕсем йутçĕршывсенче пропагандăла-сăтарла, завнашкалах тата шпионла ĕçсем арни çинчен çырат.

Хаçат сведенийĕсем тăрăх, Германи фашисăмĕ çав ĕçсене туma 1937 çулта 20 мĕлйун ытла фунт стерлинг расхутланă. Çав укçан ытларахĕш пайне Германи фашисĕсем „Хĕллехи пулăшу" текен фондран илеççĕ. Германире питĕ нумай çемйесем калама çук чухăнлăхра пурăнаççĕ. Германи фашисĕсем çав чухăнсене пулăшма, тесе кашни çулах „хĕллехи пулăшу кампанийĕ" ирттерме йышăннă. Анчах, çав кампанипе пухнă укçа йутçĕршывсенче сăтарла тата шпионла ĕçсем тума кайат.

Германи фашисăмĕ йутçĕршывсенче пропагандăла-сăтарла тата шпионла ĕçсем тума пысăк аппарат тунă. Вăл аппаратра 25 пин фашисла агент тата Гестапон (вăрттăн полици) 3.450 уйрăм агенче тăраççĕ, тесе кăтартса парат хаçат.

Германи фашисĕсен йутçĕршывсенчи пропагандăла-сăтарла тата шпионла ĕçĕсем Англин правителствăлă кругĕсенче питĕ хытă пăшăрхаттараççĕ, мĕншĕн тесен вăл ĕçсем Англи лăпкăлăхĕн тĕрлĕ пайĕсенчи интересĕсене хирĕç самайах пыраççĕ, тесе палла тăват хаçат.

(ТАСС).

Францире каллех хĕçпăшалсем тупнă

ПАРИЖ, йанварĕн 3-мĕш. (ТАСС). „Йумените" хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Авинйон сывăхĕнче каллех хĕçпăшал склачĕ тупнă. Ку склад Францире нумай пулмаст тăрă шыв çине кăларнă фашисла заговора хутшăннисен пулнă пулмала.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „Колхозра кашнă вăхатра". Йу. Бершадски художник „Чечекленекен Социалисăмла Украина" выставкăна тăратнă ÿкерчĕк.

С. Шимански репродукцийĕ (Союзфото).

Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ Польшă посольствине панă нотă

Польшăн чикĕри тата чукунçул власĕсем Здолбуново станцинче провокаци тунă пирки (декабĕрĕн 3-мĕшĕпе 18-мĕшĕнче ТАСС пĕлтернине пăх) Мускаври Польшă поверенныйĕ 1937 çулхи декабĕрĕн 23-мĕшĕнче нотă панă пулнă. Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ йанварĕн 3-мĕшĕнче çав нотăна ответлесе Польшă посольствине нотă панă. Вăл нотă пулнă ирттисем çинчен Польшă саракан сÿйана таталла сирет тата Варшаври полпредствă панă таталла протест пĕтĕмĕшпех тĕрĕс тесе шутлат.

(ТАСС).

Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ Польшă посольствине нотă панă май, йанварĕн 4-мĕшĕнче тухнă „Правда" хаçат çапла кăтартса парат:

„Совет вагонĕсене вут тĕртекен чăн-чăн айапла çынсене пытарас майпа Польшă телеграф агенстви 1937 çулхи декабĕрĕн 23-мĕшĕнче панă ответла нотăн содержанине пичетлесе кăларнă. Польшă телеграф агенстви пĕлтерни совета хирĕçле çĕнĕ кампанин сигналĕ пулса тăчĕ. Польшă, пичечĕ Польшă çĕрĕ çинче вагонсене вут тĕртнишĕн совет чукунçулĕ çинче ĕçлекенсенех айăпламa хăтланат. Çак хăтлану вăл ирĕксĕрех Итали фашисĕсен совет морйакĕсене, вĕсем хăйсемех хăйсен теплоходĕсене путараççĕ тесе айăпланисене аса илтерет.

Çавăн майлă ĕçсем патне Польшăри фашиссемпе пĕр пек шухăшлă çыннисем те туртăнма пуçларĕç пулас".

Йутçĕршывсенче

ВАРШАВА, йанварĕн 3-мĕш. Тарнополь-ре, коммунисла ĕçсемшĕн айăпланнă 51 çынна суд тунă. Суд 37 çынна çур çултан пуçласа 6 çул таран тĕрлĕрен срукпа тĕрмере хупса усрамала приговор йышăннă. 14 çынна айăпран хăтарнă.

ХАНЬКОУ, йанварĕн 2-мĕш. „Сăут чайна морнинг пост" йатлă хаçат Токиоран, Китай фронтĕнчи Йапони салтакĕсен çемйисем Америкăран вăрçăна хирĕçле пиншер çырусем илеççĕ, тесе пĕлтернине пичетлесе кăларат. Вăл çырусенче салтаксен çемйисене Китайри вăрçă Йапони халăхне нимĕнле усă та памаст. Йапони тата çавнашкалах Китай халăхĕн телейсĕрлĕхĕпе чухăнлăхне ÿстерет çеç, тесе ăнлантарса панă. Çырусене Йапони чĕлхипе çырнă.

Йапони таможеннăйĕсемпе почтă чиновникĕсене Йапонийе вăрçăна хирĕçле çырусем пырассине чарса лартма çирĕп распорйажени панă.

ПАРИЖ, йанварĕн 2-мĕш. Гавас агенстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн Ассошиейтед пресс агенствин корреспонденчĕ Едуард Нейл, Теруел фронтĕнче суранланнăскер, унăн ÿчĕ çине йун йанă пулинте, йанварĕн иккĕмĕшĕнче ирхине вилнĕ.

ХАНЬКОУ, йанварĕн 2-мĕш. Йанварĕн 1-мĕшĕнче Линьфынь хулинче (Шаньси провинцийĕ) массăлă митинг пулса иртнĕ. Вăл митинга çĕр пин çын хутшăннă. Митинг Шаньси провинцинчи пĕтĕмĕшлĕ мобилизаци ыйтăвĕ тăрăх пулнă. Митингра сăмах тухса калакансем Йапони агрессине вĕçне çитиччен хирĕçлессишĕн, Китай правителствине хута кĕрессишĕн тата Йапони захватчикĕсемпе кирек мĕнле каласса таталассине те хирĕç пурте пĕр шухăшлăн каланă.

ПАРИЖ, йанварĕн 3-мĕш. Гибралтартан Еспань агенстви пĕлтернĕ тăрăх, Италин 5 пин салтакĕ Санта Марийа портне пынă. Ку çарсене Теруел участки валĵи илсе пынă текен сасă пур.

Çавнашкалах тата Италин 100 лётчике йахăн Сеутăна (Испани Марокки) пынă, тесе пĕлтереççĕ.

ПАРИЖ, йанварĕн 3-мĕш. Мĕн пур сведенисем тăрăх, Гитлер Рима майăн 9-мĕшĕнче пырса, Италире вăл 6—7 кун пурăнмала, тесе пĕлтерет пичет.

(ТАСС).

Укçа-тенкĕ планне Чăваш АСС Республикĕнче мĕнле тултарса пынине кăтартакан

СВОДКА

(1937 çулхи IV-мĕш квартал декабĕрĕн 31-мĕшне)

Район йачĕсем	Плана тултарнă процентпа
Шупашкар хули	126,6
Улатăр	86,8
Вăрнар	86,5
Сĕнтĕрвăрри	84,5
Çĕрпÿ	82,8
Канаш	82,1
Çĕмĕрле	80,9
Улатăр	80,3
Шăнкартам	78,9
Трак	76
Пăрачкав	75,6
Елĕк	75,2
Йетĕрне	75,1
Шупашкар	72
Куславкка	71,5
Кувакинă	70,4
Тутаркас	69,4
Тăвай	68,6
Хĕрлĕ Чутай	67,9
Ишлей	66,7
Йелчĕк	66,5
Йĕпреç	66
Тÿрхан	65,2
Шăхасан	65,2
Вăрмар	64,9
Патăрйел	61,2
Шăмăршă	60,6
Пĕтĕмпе	76,6

Театр.

„Пограничниксем"

Пĕрремĕш колхоз театрĕ Шемшерте

Декабĕрĕн 27-мĕшĕнче Шĕмшере (Шупашкар р.) Сĕнтĕрвăрринчен пĕрремĕш колхоз театрĕ килсе вырăссен паллă драматургĕ Биль-Белоцерковский çырнă „Пограничниксем" пйесăпа спектакль кăтартса пачĕ.

Пйесă хăйĕн содержанипе халĵхи вăхăтра пирĕн тăван çĕршывăн чиккисенче пулса иртекен пурнăç-кĕрешĕве куçа-куçăн курнă пек кăтартса парат. Çак пйесăпа колхозсене тухса йалти сценăсем çинче лартса, колхоз массине хăйула та герой-пограничниксен кулленхи пурнăçĕпе, кĕрешĕвĕпе паллаштарни питĕ кирлĕ те, питĕ выранлă та.

Ĕç пĕрмайах чикĕре пулса иртет. Пирĕн пограничниксем пĕрмайах пекех йут патшалăхсенчен тĕрлĕ ултавсемпе, йалачах вăрттăн пирĕн çĕршыва кăçса килекен шпионсемпе, диверсантсемпе куçа-куçăн хирĕç пулаççĕ. Анчах совет çĕршывĕ, коммунисен партийĕ пăхса çитĕнтернĕ совет пограничникĕсем кашни самантрах сыхă тăраççĕ. Пограничниксем кăна мар, чикĕ таврашĕнче пурăнакан колхозниксем те кирек мĕнле вăхăтра та фашисла шпионсемпе диверсантсене палласа илме вĕреннĕ.

.. Чикĕри арман. Арман мелникĕ ватă, анчах унăн çамрăк та хитре хĕрĕ Лена (артисткă М. Илйина) пур. Çак, малтанлăха пăхсан, „ырă кăмăлла" пек туйăнакан мелникпе хĕрĕ нимĕнле усал ĕç те тума пултараймаççĕ пек, анчах фашисла шпионсемпе диверсантсемшĕн арман мелникĕпе хĕрĕ шанчăклă çынсем пулнă. Арман мелникĕ хăйĕн хĕрĕ урлă пограничник Ваççăна хăйĕн майлă çаварат, вара Лена Ваççăран çекретлă ĕçсем çинчен ыйтса пĕлесшĕн. Пограничник Ваççă мелник хĕрне чунтан чĕререн йуратат пулсан та хăйĕн таса обйазаннăçне манмаст. Кирек мĕнле пулсан та, государствă интересне, тăван çĕршывăн интересне сутни—вăл пуринчен ытла пысăк преступлени. Ваççă хăй çавна чухласа туйса илет.

... Акă заставă начальникĕн (артист Моисейев) кабинетне темскерле палла мар çынна илсе кĕреççĕ. Çак паллă мар çын кирек мĕнле танатана çаклансан та çăлăнса тухма пултармала пек, анчах... совет пограничникĕсенчен çăланма çук. Вăл (паллă мар çын) заставă начальникĕ умĕнче йăпăлтатат те, ачашланат те, темĕн те пĕр тăват. Заставă начальникĕ ăна тăрă шыв çине кăларвах пырат. Йулашкинчен чайнике икĕ тĕплĕ тунине тупсан, унăн диверси тумалли плана туртса кăларсан, спектакль курма пынисен умне усал, шпион-диверсант тухса тăрат. Çук, совет пограничникĕсене улталаймĕç!

Артиссем, пĕтĕмĕшпе илсен, аван выляреç. М. Илйина артисткă мелник хĕрĕн Ленăн ролне малтан пуçласа вĕçне çитиччен тивĕçлипе тытса пырса вĕçлерĕ. Уйрăмах вăл пограничник Ваççă умĕнче йăпăлтатни йе йунтарни, çавсем урлă Ваççăран çекретлă ĕçсене ыйтса пĕлме тăрăшни аван тухрĕ. Пограничник Ваççă (артист П. Игнатйев) тата заставă начальникĕ (артист Моисейев) темскерле йăвăр условисенче те тăван çĕршывшăн çирĕп тăнине, тăван çĕршывшăн пуçа хума хатĕррине лайăх кăтартса пачĕç. Артист Кузьмин пысăк диверсантăн сăн-сăпатне тума пĕлнĕ. Заставă начальникĕн помошникĕ (артист Виноградов) хăйĕн ролне туса çитереймен. Унăн тимлĕх, çарти выправкă çитмест, вăл пĕртте пограничник пек мар. Çавах та, спектакль аван иртрĕ.

Пĕрремĕш колхоз театăрĕ Шемшерте иккĕмĕш хут пулчĕ. Пĕлтĕр вĕсем „Дубровский" кăтартса хăварчĕç, анчах кăçал халĵхи пурнăçăн тематикипе çырнă пйесăна кăтартни паха. Унсăр пуçне театр килни Шемшерти драмкружок ĕçне вăйлатма пулăшат. Колхоз театрĕн артисĕсем вылĵани драмкружок членĕсемшĕн ролсене мĕн тери ответлă вĕренме кирлине, лайăх спектакль тăвас пулсан нумай тăрăшса ĕçлемелине лайăх кăтартса хăварчĕç.

К. Н.

Рабочисен хор кружокĕ концерт пачĕ

Декабĕрĕн 31-мĕшĕнче Канашри вагонсем йусакан заводри рабочисен клубĕнче А. Нечайев йулташ йертсе пыракан чăваш рабочисен хор кружокĕ çĕнçул йачĕпе чаплă концерт пачĕ. Заводри стахановецсенчен тăракан 35 çынлă хор кружокĕ чăвашла тата вырăсла йурăсене 10 йура йурласа пачĕ.

Рабочисем хор кружокĕ пултаруллă йурланине пысăк кăмăлпа итлесе ларчĕç. Уйрăмăнах „Çывăхран та çывăх Сталин", „Марш железнодорожников", „Алран кайми аки-сухи", „Соловей соловушка" йурăсем кăмăла кайрĕç.

Завод çумĕнчи вăтам шкулта вĕренекенсен нумай çынран тăракан хорĕ Нечайев йертсе пынипе 6 йура йурларĕ. Уйрăмах „Ну, как не запеть", „Йăс таканлă", „Марш водолазов" йурăсене кăмăла килĕшмеле йурласа пачĕ.

Концерта пурĕ 600 çын итлерĕç.

И.М.

„Çурçĕр польусĕ" станцинче

Йанварĕн 3-мĕшĕнче кăнтăрла иртни пĕр сехетре куçса çÿрекен пăр çинчи „Çурçĕр польусĕ" станцийĕ çурçĕр широтин 79 градусĕ те 36 минутинче тата хĕвеланăç долготин 7 градусĕ те 17 минутинче пулнă.

Станци районĕнчи çанталăк пĕлĕтсĕр, температурă 30 градус сивĕ.

(ТАСС).

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

1938 çулшăн

„Чăваш Коммунĕ" Издателстви кăларакан

Йумăрпа сатирă журналне

„КАПКĂН"

çырăнтарасси халĕ те пырат

Журнал чăвашла уйăхра пĕрре тухса тăрат.

Пĕр номĕрĕ 40 пус.
Ултă уйăха 2 т. 40 пус.
Çулталăка 4 т. 80 пус.

ПОЧТАЛЬЙОН!

Подпискăна

çурçуллăха, çулталăклăха

пухма тăрăш.

Журнал сарас тата ăна вăхăтра çитерес пахалăхшăн ĕçле.

„Капкăн" редакцийĕ.

3—

АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

йанварĕн 5-мĕшĕнче

вырăсла спектакль

Тур тăванĕсемпе ШЕЙНИН

„ОЧНАЯ СТАВКА"

(4 пайлă)

Аслă режиссор Г. В. СТРАНСКИЙ лартат. Талон № 73.

Кăçалхи йанварĕн 1-мĕшĕнче

лаша (кĕсре) пăрахса тарнă

Çăрасунана кÿлнĕскер, турă тĕслĕ, çамки çинче шурă.

Çак адреспе пĕлтермеле: Шупашкар районĕнчи Хыркасси йалсовечĕ, „Актив" колхоза.

1937 çулхи октябĕрĕн 15-мĕшĕнче Пихтулински вăрман дачинче кĕтÿре çÿренĕ çĕртен

ЛАША (кĕсре) ÇУХАЛНĂ

сутă-сарă тĕслĕ, çилхи икĕ йенеле, хÿри çилхи хура тĕслĕ, çÿллĕш 135 сантиметр.

Пĕлекенсен çак адреспе пĕлтермеле: Тутаркас районĕ, Шашкар йал-чĕ, „Крестьянская газета" колхоза. Пĕлтернĕшĕн укça параççĕ.

Шупашкарти пристань

шыв тăрăх тата шывпа чукунçул тăрăх, çавнашкалах Чăваш республикинчи тĕрлĕ вырăнсене грузсем йаракансене

1938 çулти навигацире

мĕнле грузсем йарас пирки йанварĕн 10-мĕшĕччен

зайавкăсем тăратма ыйтат.

ЗАЙАВКĂРА:

мĕнле грузне, ăçти вырăна йамалине, мĕнле хăвăртлăхпа (пысăк, пĕчĕк), тонна шучĕ, тонна-километр—пурне те кăтартса çырмала. Пĕрремĕш çура навигацине ийулĕн 1-мĕшĕччен, иккĕмĕш çурă навигацине—навигаци хупăничченн шутлаççĕ.

Зайавкă тăратман клиентсем грузсене вăхăтра йама черете кĕреймеççĕ, вĕсен грузĕсем вырăн пур чух çеç кайма пултараççĕ.

Пристань çавнашкалах тата 1938 çулхи навигацире грузсем турттарма договорсем тăват.

АДРЕС: Шупашкар, — Чувашскайа урамĕ № 13.

ССР Союзĕн Государствă страхованийĕ

КОЛХОЗСЕМ

акнă тĕштырăсене, пăрçалă тата технически культурăсене; сат-пахчисене, çырла пахчисене, лашасене, ĕнесене, ытти вак выльăхсене, çурт-йĕрсене, хуçалăхри ĕçхатĕрĕсене тата ытти пурлăхсене

страхлама пултараççĕ

Колхозсен, колхозниксен, уйрăм хуçалăхлă хресченсен, рабочисен, служащисен тата ытти граждансен пурлăхĕсене

ирĕклĕ йĕркепе страхлама пулат

Рабочисем, колхозниксем тата служащисем

КИЛТИ ПУРЛĂХА СТРАХЛАМА ПУЛТАРАÇÇĔ

тĕрлĕрен справкăсем тата ăнлантарусем илме районсенчи тата хуласенчи страховой инспекцисене, çавнашкалах Госстрах агенчĕсем патне тата Государствă страхованийĕн Чăваш республикинчи уйрăмне пымала.

Шупашкар хули, К. Маркс урамĕ, 12. Тел. № 2—76.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 5 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене каялла памаççĕ.

Уполномоченный Чуваглавлита 7. Гор. Чебоксары, Типографин № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2. Тираж 1370, 53—52 см. 1—1 п. л.